24-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1941
АПРЕЛЬ
15
ЫТЛАРИКУН
88 (5803) №

ЧĂВАШ КОММУНИ

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ.

Республика бюджечĕ

Енер Чăваш АССР Верховный Совечĕн V Сессийĕ уçăлчĕ. Сесси республикăн 1941 çулти бюджечĕ çинчен Чăваш АССР Финанс Халăх Комиссарĕн Ф. Семенов юлташăн докладне итлерĕ.

Государство бюджечĕ халăх хуçалăх аталанăвĕн планĕнчен тухса тăрать. Халăх хуçалăхĕ тата социаллă-культурăллă строительство валли бюджетăн укçа-тенкĕ çителĕклĕ парса тăмалла. Пирĕн бюджет, социализмлă, аслăланса пыракан воспроизводство законĕсене пăхăнса, план тăрăх аталанакан халăх хуçалăхĕ çине таянса тăрать. Бюджет ÿсĕмĕн никĕсĕ—социализмлă хуçалăхăн накопленийĕсем пулса тăрассĕ.

Пирĕн социализмлă тăван çĕршыв хăвăртăн ÿссе, аталанса пырать. Кашни çулах пысăк заводсемпе фабрикăсем, шахтăсемпе домнăсем, чугунçулсем хутшăнаççĕ. Колхозлă ял çĕнелсе тата тĕрекленсе пырать. Унăн уйăхрĕсенче хăватлă машинăсем—тракторсемпе комбайнсем çĕлеççĕ, вĕсен шучĕ çулран çул ÿсет. Хуласенче те, ялсенче те шкулсем, больницăсем, ача-пăча сачĕсемпе площадкисем, вулав çурчĕсем тата ытти культурăллă учрежденисем нумайланаççĕ. Çаксене совет халăхĕ хăйĕн укçи-тенкипе, ютçĕршывсенчен кивçен илмесĕр, туса пырать. Социализмлă çĕршывăн финанс тĕрекĕпе вăй-хăвачĕ халĕ ĕнтĕ нихăçанхинчен те çирĕп.

Пирĕн çĕршыври нумай наципллĕ çемьере, Совет Союзĕн пĕтĕм халăхĕсемпе пĕрле, Чăваш республикинчи ĕççыннисем те, сталинла виççĕмĕш пятилеткăн экономикăллă задачисене пурнăçлас тĕлĕшпе пысăк ĕçсем туса пыраççĕ. Халăх хуçалăхне аталантарас енĕпе кăçалхи çулта пысăк ĕçсем туса тăмалла. Çак ĕçсен калăпăшне 1941 çулти бюджет аван кăтартса парать.

Кăçалхи бюджет дохочĕсене 163851,1 пин тенкĕлĕх палăртнă, вăл иртнĕ çулти бюджетран 14018,4 пин тенкĕ ытларах пулать. Расходсене иртнĕ çултинчен 13,1 процент ытларах — 163851,1 пин тенкĕлĕх палăртнă. Çак цифрăсем вĕсем пирĕн республикăн халăх хуçалăхĕ, культурăпа йăла строительстви хăвăрт ÿссе пынине кăтартса параççĕ. Республикăри хăшпĕр предприятисем çакна пурнăçа кĕртсе пымаççĕ.

Сĕнтĕрвăрринчи спиртзавод иртнĕ çулта 5660 кубометр вутă ытлашши сунтарнă, тирпейсĕр сыхласа усранă пирки, 339 тонна çĕрулми сая янă, тĕрлĕ штрафсем 480 пин тенкĕ тÿленĕ. Заводра çăнăхпăкал хуçасăрлăх пулнă пирки, ĕç тухăçлăхне ÿстерессишĕн кĕрешмен пирки, продукцин хăйне лараканхакĕ планпа пăхнинчен 14,8 процент пысăкрах пулнă. Хуçалăх çулне тупăмлă вĕçлес вырăнне завод 429 пин тенкĕлĕх убыток курнă. Çакăн пек тĕслĕхсем пирĕн республикăра татах та пур.

1941 çулта республикăри предприятисенчен тата хуçалăх организацисенчен бюджета кĕмелли тупăш хисепĕ 9695 пин тенкĕ шутланать. Накопленипланне тултарассишĕн предприятисемпе наркоматсен руководительсем ответлă пулса тăраççĕ, апла пулсан, вĕсен производствăллă плана хисеп енчен те, пахалăх енчен те пĕтĕмпех тултарассишĕн, продукцин хăйне лараканхакне йÿнетессишĕн, простойсемпе браксене пăчах пĕтересситĕн большевикла кĕрешес пулать.

Кăçал управлени валли каякан расходсене 2174,9 пин тенкĕ чакарма палăртнă. Калас пулать, Финанс Халăх Комиссариачĕ, çавăн пекех хуçалăхлă организацисем те, управлени валли каякан расходсене чакарса пырассишĕн, штатсене пĕчĕклетессишĕн тивĕçлипе кĕрешсе пыман. Хăшпĕр çĕрте штатсене ытлашши ÿстереççĕ, ĕçукçине сметăпа пăхнинчен ытлашши хăпартса тÿлеççĕ. Çакăн пек çитменлĕхсене малашнехи ĕçре финанс органĕсен пĕтĕмпех пĕтерсе пырас пулать.

Кăçалхи çул таварçавăрнăш чылай ÿсет. Вăл вырăнти чĕртавартан куллен кирлĕ таварсемпе продовольстви туса кăларма, совет суту-илÿ ĕçĕн культурине, пахалăхне аванлатса пыма хушать. Суту-илÿ организацисен, промышленность работникĕсемпе пĕрлех, продукци пахалăхне лайăхлатассишĕн тата таварсен ассортиментне пуянлатассишĕн хытă тăрăшмалла. 1941 çулта куллен кирлĕ таварсем тата продовольстви туса кăларасси вăйланать. Таварçавăрнăшне çĕнĕ япаласем тата çимĕç сем хутшăнаççĕ. Çавăнпа та вăл таварсемпе чăн-чăн культурăллă суту-илÿ туни кирлĕ, таварçавăрнăш планне кашни магазин, кашни сельпо тăрăх тултарса пымалла, оборотран илекен налога государство бюджетне вăхăтра куçарса тăмалла.

Халăхран илекен налогсемпе сборсенчен тата колхозсенчен илекен подоходлăй налогсенчен бюджета пĕтĕмпе 29001 пин тенкĕ кĕмелле. Вăл бюджетăн пĕтĕм пысăккăшĕнче 17,7 процент йышăнать. Çак налогсен хисепĕ, вăл пысăк мар пулин те, финанс планне тултарас çĕрте палăрăн йышăнса тăрать. СССР Верховный Совечĕн VIII Сессийĕ колхозсенчен илекен подоходлăй налог çинчен çĕнĕ закон çирĕплетрĕ тата ялхуçалăх налогĕ çинчен калакан закона çĕнĕ улшăнусем кĕртрĕ. Çак çĕнĕ законсем, паллах, налог хумалли системăна лайăхлатаççĕ тата колхоз стройне малалла та тĕреклетсе пыма пулăшаççĕ. Вырăнти советсен тата финанс органĕсен çав законсене ĕççыннисене ăнлантарса парса, вĕсене пурнăçа тĕрĕс кĕртсе пырассишĕн кĕрешмелле. Налог недоимкисене сăлтăмсăр каçарнисем тата уйăм тÿлевсем тăрăх илмелли тивĕçлĕ укçа-тенкĕне пухмасăр хăварни пачах пулмалла мар.

Бюджета доход енĕпе ăнăçлăн тултарса пыни социаллă-культурăллă ĕçсем валли укçа-тенкĕ çителĕклĕ парса тăма май парать. 1941 çулта бюджет тăрăх социаллă-культурăллă ĕçсем валли 108694,7 пин тенкĕ укçа пама палăртнă, урăхла каласан, бюджетри укçаран 66,3 процентчĕ ĕççыннисен культурăллă ыйтăвĕсене тивĕçтернĕ çĕре каять. Уйăмăн: халăха вĕрентес ĕç валли — 77020,1 пин тенкĕ, сывлăха сыхлас ĕç валли—29637,6 пин тенкĕ, физкультура ĕçĕ валли—252 пин тенкĕ, социаллă обеспечени валли—1785,1 пин тенкĕ каять. Çак ĕçсем валли иртнĕ çулти суммăран 11051 пин тенкĕ ытларах уйăрнă. Социаллă-культурăллă ĕçсем валли, уйăмăнах халăха вĕрентес ĕç валли, çакăн пек пысăк сумма уйăрса пани ВКП(б) XVIII съезчĕ лартнă задачăран—виççĕмĕш пятилеткăра хуласене пурне те вунă çул вĕрентессине тата ялсенче пурне те çичĕ çул вĕрентессине пурнăçа кĕртес задачăран тухса тăрать.

Социаллă-культурăллă ĕçсем валли укçа-тенкĕ пĕр чăрмавсăр парса тăрасси—вырăнти советсемпе финанс органĕсен ответлă та пысăк задачи пулса тăрать.

Социализмлă тăван çĕршывăн тĕрекне, унăн оборонăллă вăй-хăватне малалла та çирĕплетсе пырассишĕн, совет ĕççыннисен материаллă тата культурăллă пурнăç шайне хăвăртăн ÿстерсе пырассишĕн партине правительство ывăнма пĕлмесĕр тăрăшнине ĕçсыннисем бюджетăн кашни статьине уççăн курса тăраççĕ. Бюджет цифрисем пĕтĕм халăха савăнтараççĕ, çак цифрăсенче совет çыннисем хăйсен паттăрла ĕçĕсен результачĕсене курса тăраççĕ. Пирĕн бюджет совет ĕççыннисене çĕнĕрен те çĕнĕ çĕнтерÿсем тума хавхалантарать.

Республика бюджетне пурнăçа ăнăçлăн кĕртесси—вырăнти советсен, финанс органĕсемпе хуçалăх организацисен тата республикăри мĕнпур ĕççыннисен пысăк задачи пулса тăрать. Ана пурнăçа кĕртсе, эпир большевикла парти ертсе пыннипе, аслă Сталин ертсе пыннипе, çĕршывăн пуянлăхне татах та ытларах ÿстерĕпĕр, унăн хăватне татах та ытларах тĕреклетĕпĕр.

Шахматистсен матч-турнирĕ

Апрелĕн 12-мĕшĕнче вуниккĕмĕш турта Бондаревский Болеславскипе выляса илнĕ. Смыслов—Керес партийĕ вылянса пĕтмен; çак партире Кересĕн икĕ ладья, Смысловăн ферзь тата пĕр пешка юлнă.

Ботвинникпе Лилиенталь та выляса пĕтереймен. Çак партире Лилиентальăн положенийĕ кăшт лайăхрах.

Апрелĕн 13-мĕшĕнче вунвиççĕмĕш турта Кереспа Ботвинник, çавăн пекех Смысловпа Бондаревский ничья тунă—пĕрне пĕри çĕнтереймен.

Лилиенталь чирлĕ пулнă, çавăнпа та вăл Болеславскипе вылямалла пулнă партие выляйман.

13-мĕш тур хыççăн малта Ботвинник пырать, вăл 10 партирен 6,5 очко выляса илнĕ. Ун хыççăн çаксем пыраççĕ: Керес—11 партирен 6 очко илнĕ, Смыслов—11 партирен 5 очко, Бондаревский—9 партирен 4,5 очко, Болеславский—8 партирен 5,5 очко, Лилиенталь—9 партирен 3,5 очко илнĕ.

(ТАСС).

Г. К. Орджоникидзе музейĕ

Орджоникидзе хулинче (Сталино облаçĕ) историллĕ-революциллĕ музей тăваççĕ. Музейăн икĕ хутлă пысăк çурчĕ — хула центрĕнче.

Нумай хиселлĕ экспонатсене — документсене, картинăсене, Григорий Константиновичăн хăйĕн япалисене — II залра вырнаçтарса тухаççĕ. Сталино, Макеевка, Горловка, Серго, Краматорск хулисемпе Донбасри ытти хуласенче интереслă фотографисене, сăрасене, Г. К. Орджоникидзе çинчен чаплă çынсем каласа панисене пухнă.

Чăваш АССР 1-мĕш созыври Верховный Совечĕн V Сессийĕ

Чăваш АССР Верховный Совечĕн V Сессийĕн 1941 çулти апрелĕн 14-мĕшĕнчи ларăвĕ çинчен

ИНФОРМАЦИЛЛĔ ПĔЛТЕРÛ

Апрелĕн 14-мĕшĕнче, каçхине 7 сехетре, Шупашкарти Советсен Çурчĕн залĕнче Чăваш АССР Верховный Совечĕн V Сессийĕ уçăлчĕ.

Сессие Чăваш АССР Верховный Совечĕн председателĕ депутат **Н. П. Павлов** уçать.

Павлов юлташ Чăваш АССР Верховный Совечĕн V Сессинче пăхса тухма тăратнă ыйтусем çинчен каласа пĕлтерет.

Депутат **П. Е. Ефремов** Чăваш АССР Верховный Советĕнче пăхса тухма тăратнă ыйтусене Чăваш АССР Верховный Совечĕн V Сессийĕн кун йĕркине кĕртме сĕнÿ парать.

Чăваш АССР Верховный Совечĕ, пĕр саслă пулса, çакăн пек кун йĕрки çирĕплетет:

1. Чăваш АСС Республикин 1941 çулти бюджетне çирĕплетесси тата Чăваш АССР 1940 çулти бюджетне пурнăçа кĕртни çинчен тунă отчета çирĕплетесси.

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ тăратнă.

2. Чăваш АССР Верховный Совечĕн Президиумĕ III-мĕшпе V-мĕш Сессисем хушшинче кăларнă тата Чăваш АССР Верховный Совечĕ çирĕплетме тивĕçлĕ Указсене çирĕплетесси.

Сесси кун йĕркин пĕрремĕш пунктĕ тăрăх—Чăваш АСС Республикин 1941 çулти бюджечĕ çинчен ЧАССР Финанс Халăх Комиссарĕ **Ф. Т. Семенов** юлташ доклад туса пачĕ.

Унтан ЧАССР Верховный Совечĕ кун йĕркин пĕрремĕш пунктĕ тăрăх — ЧАСС Республикин 1941 çулти бюджечĕ çинчен ЧАССР Верховный Совечĕн Бюджет Комисси председателĕн **К. Д. Медянин** депутатăн содокладне итлет.

Докладсем хыççăн кун йĕркинчи пĕрремĕш ыйту тăрăх пренире **Н. С. Хабаров** (Толиково суйлав округĕ) тата **К. А. Бычиова** (Муркаш суйлав округĕ) депутатсем тухса каларĕç.

Çакăнпа ЧАССР Верховный Совечĕн V Сессийĕн пĕрремĕш ларăвĕ хупăнать.

Сталин юлташ Японин Ютçĕршыв Ĕçĕсен Министрне г-и Иосуке Мацуокăна йышăннă

Апрелĕн 12-мĕшĕнче Сталин юлташ Совет Союзĕпе Япони хушшинчи отношенисен ыйтăвĕсем тăрăх Япони Ютçĕршыв Ĕçĕсен Министрĕпе г. Иосуке Мацуокăпа калаçнă. Г-н Иосуке Мацуокăпа пĕрле Японин Москаври посолĕ г. Татекава пулнă.

Калаçăва СССР Совнаркомĕн Председателĕ тата Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ Молотов юлташ хутшăннă.

Японин Ютçĕршыв Ĕçĕсен Министрĕ г. Иосуке Мацуока Москавра

Апрелĕн 12-мĕшĕнче кăнтăрла Японин Ютçĕршыв Ĕçĕсен Министрĕ г. Иосуке Мацуока СССР Наукăсен Академийĕн Почва институчĕпе Коллоидо-электрохимически института, çавăн пекех Ф. Э. Дзержинский ячĕпе тăракан «Трехгорная мануфактура» комбинатне пырса курнă.

Каçхине г. Министр ССР Союзĕн А. М. Горький ячĕпе тăракан Художествăллă Академи театрĕнче «Три сестры» спектакльте пулнă.

Японин Ютçĕршыв Ĕçĕсен Министрĕ г. Иосуке Мацуока Москавран тухса кайнă

Японин Ютçĕршыв Ĕçĕсен Министрĕ г. Иосуке Мацуока апрелĕн 13-мĕшĕнче Москавран тухса кайнă.

Ярославский вокзалта г. Министра çаксем ăсатса янă: Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕн Заместителĕ С. А. Лозовский юлташ, Наркоминделăн Протокольлăй Отдел Заведующийĕ В. Н. Барков юлташ, Наркоминделăн Инçет-Хĕвелтухăçĕнчи 2-мĕш Отдел Заведующийĕ С. К. Царапкин юлташ, çавăн пекех тата Япони Посолĕпе г. И. Татекавăпа пĕрле Япони Посольствин составĕ, Германи Посолĕ г. Ф. В. Шуленбург, Итали Посолĕ г. А. Россо, Венгри Посланникĕ г. Ж. Криштоффи, Словаки Посланникĕ г. Ф. Тисо, Болгари Посланникĕ г. И. Стаменов, Румыни Посланникĕ г. Г. Гафенку.

Поезд тапранса каяс умĕн вокзала И. В. Сталин юлташ тата СССР Совнаркомĕн Председателĕ тата Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов юлташ пынă, вĕсем г. Мацуокăпа сывпуллашнă.

Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссариатĕнче

Кăçалхи апрелĕн 12-мĕшĕнче Венгрин ССР Союзĕнчи Посланникĕ г. Ж. Криштоффи Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕн Заместителĕ А. Я. Вышинский юлташ патĕнче пулнă тата Венгри правительстви хушнипе Венгри правительстви хăйĕн войскисене Югослави территорийĕ çине мĕнле çăлтавсемпе кĕртни çинчен каласа парса, Совет правительстви Венгрин çак ĕçĕсене тĕрĕс тесе ĕнăшăнасса шанса тăни çинчен каланă.

Çак заявлени çине А. Я. Вышинский юлташ çакăн пек ответ панă:

— Çак заявленине, Совет правительстви хăйĕн шухăшне каласа патăр, тесе тунă пулсан, манăн çакна калас пулать: Совет правительстви Венгрин çăкнашкал утăмне ырлама пултараймасть. Венгрия Югославипе ĕмĕрлĕх туслăх çинчен пакт тунă хыççăн пурĕ те тăватă уйăх хăна иртнĕ хыççăн ăна хирĕç вăрçă пуслани,—çак обстоятельство Совет правительствин куçĕ умĕнче уйăмах начар ĕç пулса тăрать. Венгрин хăй инкеке лекес пулсан тата ăна таткаласа çурма пуçлас пулсан, Венгрия мĕнле положение кĕрсе ÿкессине ăнланса илме йывăр мар, мĕншĕн тесен Венгрире те пĕчĕк нацисем пурринепурте пĕлеççĕ.

Посланник СССР Правительстви çак заявленине хăйĕн правительствине памапулнă.

Совет Союзĕпе Япони хушшинче нейтралитет çинчен Пакт тунă

Юлашки кунсем хушшинче Мускавра СССР Совнаркомĕн Председателĕпе тата Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕпе В. М. Молотов юлташпа Японин Ютçĕршыв Ĕçĕсен Министрĕ г-н Иосуке Мацуока хушшинче калаçусем пулса иртнĕ, калаçусем хыççăн Совет Союзĕпе Япони хушшинче нейтралитет çинчен Пакт тунă, çавăн пекех тата Монголи Халăх Республикипе Манчжоу-Го территорийĕсен тĕрĕс-тĕкеллĕхне тата вĕсен чиккисене никам пырса тĕкĕнмелле мар положенине пĕр-пĕри хисеплесси çинчен калакан Декларацине алă пусса çирĕплетнĕ.

Калаçусене Сталин юлташ хутшăннă, Япони енчен — Японин Мускаври Посолĕ г-н Татекава.

Аялта Пакт текстĕ пичетленет.

Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕпе Япони хушшинче нейтралитет çинчен тунă Пакт

Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн Верховный Совечĕн Президиумĕ тата Унăн Величестви Японин Императорĕ, икĕ çĕршыв хушшинчи мирлĕ тата туслă отношенисене çирĕплетес кăмăлпа шута илсе, нейтралитет çинчен Пакт тума йышăннă, тата çак ĕç валли хăйсен уполномоченнийĕсене уйăрнă:

Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн Верховный Совечĕн Президиумĕ:

Вячеслав Михайлович Молотова, Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председательне тата Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарне;

Унăн Величествипе Японин Императорĕ:

Иосуке Мацуокăна, Ютçĕршыв Ĕçĕсен Министрне, Жюсанмине, таса сокровищĕн пĕрремĕш степеньлĕ орденĕн кавалерне, тата

Иосицуту Татекавăна, Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕнчи Чрезвычайнăй тата Полномочнăй Посола, генерал-лейтенанта, Жюсанмине, хăпаракан хĕвелĕн пĕрремĕш степеньлĕ орденĕн тата ылттăн коршунăн тăваттăмĕш степеньлĕ орденĕн кавалерне,

вĕсем, хăйсен тивĕçлĕ полномочийĕсене пĕр-пĕрне кăтартнă, вĕсене кирлĕ пек тата законлă йĕркепе панă тесе йышăннă хыççăн, çакăн çинчен калаçса татăлнă:

1-мĕш статья

Калаçса татăлакан Икĕ Енĕ те пĕр-пĕрин хушшинче мирлĕ тата туслă отношенисем тытса тăма тата Калаçса татăлакан Икĕ Енĕ те пĕр-пĕрин территорийĕн тĕрĕс-тĕкеллĕхне тата никам пырса тĕкĕнмелле мар положенине хисеплеме пулаççĕ.

2-мĕш статья

Калаçса татăлакан Енĕсенчен пĕри виççĕмĕш державăсем—пĕр державă е темиçе державă енчен пуçланă вăрçă объекчĕ пулса тăрас пулсан, Калаçса татăлакан тепĕр Енĕ пĕтĕм конфликт тăршшĕнче нейтралитет тытса тăрать.

3-мĕш статья

Çак пакт ăна Калаçса татăлакан Енĕсем Иккĕшĕ те ратификацилеменĕ кунтан пуçласа вăй илет тата хăйĕн вăйне 5 çул хушшипе сыхласа усрать.

Калаçса татăлакан Енĕсенчен пĕри те пакта срок тухиччен пĕр çулталăк маларах денонсаци тумасан, вăл хăй тĕллĕнех тепĕр 5 çула тăсăлнă шутланать.

4-мĕш статья

Çак Пакта май килнĕ таран кĕске срокра ратификацилемелле. Ратификаци грамотисене, çавăн пекех, май килнĕ таран кĕскерех срокра Токиора улăштарса илмелле.

Çаксене ĕнентерсе, çÿлте асăннă уполномоченнăйсем çак Пакта икĕ экземплярпа, вырăс тата япон чĕлхисемпе çырса хатĕрлесе, алă пусса çирĕплетнĕ тата ун çине хăйсен пичетĕсене пуснă.

Мускавра 1941 çулти апрелĕн 13-мĕшĕнче çырса хатĕрленĕ, çак вăхăт вăл Сиовăн 16-мĕш çулĕнчи тăваттăмĕш уйăхĕн 13-мĕш кунĕпе танлашать.

В. МОЛОТОВ. ИОСУКЕ МАЦУОКА.
ИОСИЦУГУ ТАТЕКАВА.

ДЕКЛАРАЦИ

ССР Союзĕпе Япони хушшинче нейтралитет çинчен 1941 çулти апрелĕн 13-мĕшĕнче тунă Пактăн тĕп шухăшĕпе килĕшÿллĕн, ССР Союзĕн правительствипе Япони правительстви, икĕ çĕршыв хушшинчи мирлĕ тата туслă отношенисене çирĕплетес шутпа, çакăн çинчен чаплăн пĕлтереççĕ: ССР Союзĕ Манчжоу-Го территорийĕн тĕрĕс-тĕкеллĕхне тата никам пырса тĕкĕнмелле мар положенине хисеплеме пулать, Япония Монголи Халăх Республики территорийĕн тĕрĕс-тĕкеллĕхне тата никам пырса тĕкĕнмелле мар положенине хисеплеме пулать.

Мускав, 1941 çулти апрелĕн 13-мĕш.

ССР Правительстви Полномочи панипе
В. М. МОЛОТОВ.

Япони правительствипĕн
ИОСУКЕ МАЦУОКА.
ИОСИЦУГУ ТАТЕКАВА.

ССР Союзĕпе Япони хушшинче нейтралитет çинчен тунă Пакт

Паян эпир В. М. Молотов юлташ тата Мацуокăпа Татекава господинсем ССР тата Япони ячĕпе Мускавра нейтралитет çинчен алă пусса çирĕплетнĕ Пактпа Декларацине пичетлесе кăларатпăр.

Российпа Японин хушшинчи вăрçă—пораженипе тата Портсмутри договорпа вĕçленнĕ вăрçă пулнăранпа 36 çул иртрĕ. Çакă вăл Российăпа вырăс халăхĕн пораженийĕ пулман, çакă вăл халăха хирĕçле патша режимĕн пораженийĕ пулнă. Çак мĕнпур çулсем тăршшĕнче Японипе Россия хушшинче, унтан вара ССР Союзĕпе Японин хушшинче те, чылаях йывăр отношенисем пулнă, вĕсенчен час-часах вăрçăллă пысăк тытăçусем те тухса тăнă. ССР Союзĕпе Японин хушшинчи отношенисем йăркеллĕ отношенисенчен мĕнтери инçетре пулнине ăнланса илес тесен, Япони Инçет-Хĕвелтухăçĕнче 1918—22 çулсенче тунă интервенцине, Японири государство деятелĕсенчен хăшĕ-пĕрисем Совет Союзне хăйсем шутланă çулпа яма хăтланса пăхнине, Хасан кÿлли патĕнчи событисене, Халхин-Гол юханшывĕ патĕнчи Номонхан районĕнчи юнлă тытăçусене, ун чухне Хĕрлĕ Çар аркатса тăкмаллах вăйлă отпор панине аса илни те çителĕклĕ. Японири государство деятелĕсенчен хăшĕ-пĕрисем ССР Союзне хăйсен агрессивлă политикин объекчĕ вырăнне шутлама пăхнăрĕç. Çакăнта пулнă вĕсен питех те пысăк пăнăшĕ, мĕншĕн тесен ССР Союзĕ, мирлĕ политикăна çирĕппĕн пурнăçа кĕртсе пырса, хăйĕн интересĕсемшĕн ют политикăна итлеттерес тенсене нихăçан та итлемен тата итлес те çук, ăна тума никама та ирĕк паман тата ирĕк парас та çук.

Нейтралитет çинчен тунă Пакт тата Деклараци, паян пичетленсе тухнăскерсем, политикăллă пысăк вырăн йышăнакан документсем пулса тăраççĕ, мĕншĕн тесен вĕсем ССР Союзĕпе Японин хушшинчи отношенисене лайăхлатас енĕпе малалла пысăк утăм туни пулса тăраççĕ, çак ĕçе вĕсен правительствисем «икĕ çĕршыв хушшинчи мирлĕ тата туслă отношенисене çирĕплетес кăмăла шута илсе» тунă. Нейтралитет çинчен тунă Пактра туслă отношенисем тытса пырасси çинчен тата ССР Союзĕпе Япони территорийĕсен тĕрĕс-тĕкеллĕхне тата никам пырса тĕкĕнмелле мар положенине пĕр-пĕри хисеплесси çинчен калакан обязательствăсене палăртса хунă. Пакт çалла палăртса çирĕплетет: каларса татăлакан енĕсенчен пĕри виççĕмĕш державăсем—пĕр державă е темиçе державă пуçланă вăрçă объекчĕ пулса тăрас пулсан, каларса татăлакан тепĕр енĕ пĕтĕм конфликт тăршшĕне нейтралитет тытса тăрать.

Деклараци пысăк вырăн йышăнса тăрать, вăл нейтралитет çинчен тунă Пактăн тĕп шухăшĕпе килĕшÿллĕн, Монголи Халăх Республикипе Манчжоу-Го территорийĕсен тĕрĕс-тĕкеллĕхĕпе никам пырса тĕкĕнмелле мар положенине хисеплеме пĕр-пĕрне обязательство пани пулса тăрать. Çакă ĕнтĕ чикĕри тĕрлĕрен вак-тĕвек конфликтсене —пирĕн чикĕсенчи лăпкăлăха пăсса пынă, Манчжоу-Гопа Монголи Халăх Республики хушшинче кăна мар, тата Совет Союзĕпе Япони хушшинче те яланах хирĕçÿсем кăларса пынă сăлтав пулса тăнă конфликтсене пĕтерет.

Нейтралитет çинчен калакан çак Пакта хальхи самантра, империализмлă иккĕмĕш вăрçă сарăлса тата çĕнĕ те çĕнĕ çĕршывсене çăвăра-çăвăра илсе пынă вăхăтра тунă, çакна кура вăл татах та пысăкрах вырăн йышăнса тăрать. Çакăн пек самантра ССР Союзĕпе Япони хушшинчи отношенисене йĕркелесе тата лайăхлатса пыни мир интересĕсемшĕн питех те паха утăм туни пулса тăрать тата Совет Союзĕ тытса пыракан политикăпа — хăйĕн кÿршисемпе тата ытти çĕршывсемпе мирлĕ отношенисем тытса тăрас шутлă политикăпа йăлтах килĕшсе тăрать.

Нейтралитет çинчен тунă Пактпа Деклараци ССР Союзĕпе Япони хушшинчи татса паман ытти ыйтусене, вăл шутра Пулă тытмалли Конвенцине, суту-илÿ договорне тата ыттисене те йĕркелесе яма çул тасатса парать. Татса паман, пысăк вырăн йышăнса тăракан çак ыйтусене татса парас ĕç час-часах çакна пула вăрăма тăсăлса пынă: Японипе ССР Союзĕ хушшинче политикăллă килĕшÿ — экономикăллă ыйтусене татса пама кирлĕ условипулса тăракан килĕшÿ пулман. Халĕ, çак условине туса хунă хыççăн, икĕ енĕ те туслăх патнелле туртăнни çинчен икĕ правительство чаплăн пĕлтернĕ хыççăн, халĕ ĕнтĕ ССР Союзĕпе Япони хушшинчи политикăллă тата экономикăллă отношенисене аталантарса пымалли çул çинче тăнă чăрмавсем сирĕлсе карĕç. Японин халичченхи правительствисем Совет Союзĕпе Япони хушшинчи кырăк кÿршĕллĕ отношенисене сыхласа тăрасси тата çирĕплетсе пырасси пысăк вырăн йышăнса тăнине хăшпĕр тĕлсенче шута илмен пулсан, Японин хальхи правительстви, вăл шутрах Министрсен Совечĕн председателĕ г. Коноэ тата ютçĕршыв ĕçĕсен министрĕ г. Мацуока çакна курса тăраççĕ: Японипе ССР Союзĕ хушшинчи мирлĕ тата кырăк кÿршĕллĕ отношенисем икĕ çĕршыври халăхсен аталанăвĕпе чечекленĕвĕшĕн кирлĕ паха услови пулса тăраççĕ.

Çак Пакта алă пусса çирĕплетсе, Совет Союзĕпе Япония хăйсем çине конкретлă обязательствăсем илчĕç, çав обязательствăсене вĕсем, паллах ĕнтĕ, пурнăçа кĕртĕç, мĕншĕн тесен икĕ çĕршыв аталанса пыракан çулĕĕрсем вĕсене, пуринчен малтан, кырăк кÿршĕсем пулма, хăйсен историллĕ задачисене пурнăçа кĕртес ĕçре пĕр-пĕрне чăрмантармасăр пурăнма, хăйсем хушшинче хирĕçÿ кăларакан сăлтавсене сирсе пăрахма хушаççĕ.

Нейтралитет çинчен тунă Пакта тата Декларацине саламласа, эпир çакна çирĕп шанса тăни çинчен калатпăр: вĕсем мир ĕçне усă кÿрĕç, ССР Союзĕпе Япони хушшинче чăн-чăн мирлĕ тата чăн-чăн туслă отношенисем туса хурас ĕçе, икĕ çĕршыври аслă халăхсем хушшинчи туслăх ĕçне пулăшĕç.

(«Правда» умстатьи, апрелĕн 14-мĕш).

ЧĂВАШ АССР 1-мĕш СОЗЫВРИ ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН V СЕССИЙĔ

ЧĂВАШ АССР 1941 ÇУЛТИ БЮДЖЕЧĔ ТАТА 1940 ÇУЛТИ БЮДЖЕТА ПУРНĂÇА КĔРТНИ ÇИНЧЕН

Чăваш АССР Финанс Халăх Комиссарĕ Ф. Т. СЕМЕНОВ юлташ тунă доклад

Депутат юлташсем! Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ Чăваш Автономлă Советлă Социализмлă Республикин 1941 çулти бюджетне пăхса тухса çирĕплетме сирĕн умма тăратать.

Çакăнпа пĕрлех республикăн 1940 çулти бюджетне пурнăçа кĕртни çинчен тунă отчета çирĕплетме сирĕн умма тăратать.

Çак Сесси Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн Верховный Совечĕн VIII Сессийĕ тата РСФСР Верховный Совечĕн IV Сессийĕ хыçăн пухăнчĕ, çав Сессисем ССР Союзĕн тата Россия Федерацийĕн 1941 çулти государство бюджечĕсем çинчен законсем йышăнчĕç.

Çав законсем халăх хуçалăхĕпе культурин мĕнпур облаçĕсенче совет халăхĕ тунă пысăкран та пысăк çĕнтерӳсене, социализмлă государствăн хуçалăхпа финанс хăвачĕ татти-сыпписĕр ӳссе пынине, унăн оборона пултарулăхĕ тĕрекленнине куçкĕски çинчи пек кăтартса параççĕ.

СССР Верховный Совечĕн Сессийĕ ССР Союзĕн 1941 çулти государство бюджетне 216 миллиард тенкĕлĕх ытла йышăнчĕ. Государство бюджетĕнчи средствăсенчен çурри ытларах пайĕ халăх хуçалăхĕпе культура ĕçне укçатенкĕ парса пынă çĕре каять.

Эпир пĕтĕм тĕнчери обстановка çавтери çивĕчленсе çитнĕ условисенче пурăнатпăр. Совет Союзĕн тулашĕнче империализмлă иккĕмĕш вăрçăн çулăмĕ ытларах та ытларах сарăлса пырать.

СССР государство бюджечĕ тăрăх оборона ĕçĕ валли 70,9 миллиард тенкĕ уйăрса памалла туни Хĕрлĕ Çарăн, Тинĕс-Çар тата Сывлăш Флочĕн çалăçу пултарулăхне мĕн вăй çитнĕ таранах вăйлатса пырасси çинчен Сталин юлташ панă кăтартусене практикăра пурнăçа кĕртни пулса тăрать.

Акă мĕншĕн ĕнтĕ Совет халăхĕ çав законсене пысăккăн хавхаланса, тулли кăмăлпа кĕтсе илчĕ.

Ленинла-сталинла наци политики союзлă тата автономлă республикăсен халăх хуçалăхне тăвăллăн ӳссе пыма, формипе нацийĕпе, содержанийĕпе социализмлă культурăна чечеклесе кайма май туса пачĕ.

Чăваш АСС Республикин халăх хуçалăхĕ, тăванлă ытти республикăсенчи пекех, Сталинла Виççĕмĕш Пятилеткăн иртнĕ 3 çулĕ хушшинче чылай малалла кайрĕ. Государствăллă тата кооперативлă промышленноçăн продукцийĕ ӳсрĕ. Уйрăмах районри промышленность вăйлăн аталанчĕ. Района пăхăнса тăракан предприятисен продукцийĕ çак çулсем хушшинче темиçе хут нумайланчĕ.

Ялхуçалăх енĕпе пысăк çитĕнӳсем тунă. Республикăн колхозлă уйхирĕсенче 1200 трактор, 380 комбайн, ялхуçалăхĕнчи ытти сложнăй машинăсем пиншерĕн ĕçлеççĕ. 1940 çулта колхозсенче вылăх-чĕрлĕх ĕрчетекен фермăсем çĕнĕрен 700 ферма ытла организациленĕ. 1939 çултипе танлаштарсан колхозсенче тырпул тухăçлăхĕ ӳсрĕ.

Çак мĕнпур çĕнтерӳсене эпир пирĕн большевикла парти, халăхсен гениллĕ çулпуçĕ аслă Сталин ертсе пынипе турăмăр. **(Тăвăллăн алă супаççĕ).**

I. 1940 çулти бюджета пурнăçа кĕртнин итогĕсем

1940 çул пирĕн республикăмăн, пĕтĕм Совет Союзĕпĕн те, социализмлă çĕнĕ çĕкленӳ пулнă тата малалла кайнă çулталăк пулса тăчĕ.

Чăваш АСС Республикин облаçа пăхăнса тăракан государствăллă промышленноçăн продукцийĕ 1939 çултипе танлаштарсан 10,7 процент ӳсрĕ. Кооперативлă промышленноçăн продукцийĕ те ӳсрĕ. Государствăллă тата кооперативлă суту-илӳн ваккăн сутакан таварçаврăнăшĕ 1940 çулта 346,5 млн. тенкĕлĕх пулнă. Иртнĕ çулта хуларипе ялти ĕçсыннисен материаллă тата культурăллă пурнăçĕ чылаях лайăхланчĕ.

Депутат юлташсем! Республикăн 1940 çулти бюджетне пурнăçа кĕртни çинчен çырнă отчета сирĕн алла валеççе панă. Отчетран çакă курăнать: бюджета доходсем енĕпе 149832,7 пин тенкĕлĕх, расходсем - енĕпе—146141,7 пин тенкĕлĕх пурнăçа кĕртнĕ. Доходсем расходсенчен 3691 пин тенкĕ ытларах пулнă.

1939 çултипе танлаштарсан бюджет доходĕсем 6496 пин тенкĕ тата расходсем 6302 пин тенкĕ ӳснĕ.

Çапах та, çакăн пек показательсем пулсан та, республикăн 1940 çулти бюджетне çителĕклĕ пурнăçа кĕртменнинчен, уйрăм наркоматсем средствăсемпе çителĕксĕр усă курнинчен, массăллă учрежденисене пĕтĕмĕшпех мар сарса янинчен килнĕ.

Наркомздрав тата райсоветсен исполкомĕсем 1940 çулта врачебно-амбулаторнăй виçĕ учреждение, фельдшерски тата акушерски 14 пункта, трахоматознăй 68 пункта, колхозсенчи ача çуратмалли 2 çурта ĕçлеттерме пуçламан. Лечебнăй учрежденисем валли врачсем тата медицинăн вăтам персоналне тупса çитереймен. Больницăсемпе лечебницăсенче пулмалли койкăсен планне тултарман. 1940 çулта колхозсенче ача çуратмалли çуртсенче план тăрăх 259 койка вырăнне 127 койка çеç пулнă.

Наркомзем енĕпе те ĕçсем çакăн пекех. Бюджет тăрăх зоотехникăллă участоксем 140 пулмалла пулнă пулсан, 1941 çулти январĕн 1-мĕш тĕлне 95 участок çеç пулнă, агротехникăллă пунктсем 36 вырăнне 34 çеç пулнă.

Çитĕннисем валли ӳснĕ, пĕтĕмĕлле пĕлӳ паракан шкулсенче вĕренекенсен [illegible] план тăрăх 4534 çын вырăнне 1941 çулти январĕн 1-мĕш тĕлне 1459 çын çеç пулнă, çавнашкал шкулсем план тăрăх 60 вырăнне 24 çеç ӳснă. Халăха çутта кăларас тĕлĕшпе ĕçлекен орăнсен тимсĕрлĕхне пула педучилищесенче тата всеобуч шкулĕсенче вĕренекенсем вĕренме пăрахни чылай пулнă.

Чылай тĕлсенче Наркомфин тата унăн вырăнти орăнĕсем бюджет тăрăх йышăннă мероприятисем валли укçа-тенкĕне пĕртан парса тăман. Хăшпĕр районсенче учительсене, врачсене тата ытти категорири работниксене ĕçукçи тӳлесси чарăнса тăнă.

Нумай райсоветсен исполкомĕсем финанс енĕпе начар ĕçленĕ, финорăнсем мĕнле ĕçленине кирлĕ пек тĕрĕслесе тăман.

Куславкка районĕн 1940 çулти бюджетне пурĕ те 91,9 процент кăна пурнăçа кĕртнине çавăнпа кăна ăнлантарса пама пулать.

Райсовет исполкомĕ бюджета подкреплени пама Совнаркомран пĕр хут çеç мар ыйтнă. Анчах та пăхăр-ха, хăйĕн дохочĕсене мĕнле пурнăçласа пынă вăл? 1940 çулта вырăнти налогсем тăрăх пухăнмалли поступленисен планне 79 процент кăна тултарнă, суту-илӳрен илмелли доходсене 44,8 процент, заем сарничен шутласа илмелли отчисленисене — 82,7 процент. Ялхуçалăх налогĕпе ытти тӳлевсене 50 пин тенкĕ ытла пухмасăр хăварнă. Юлашки виçĕ çул хушшинче халăхран средствăсем пухмалли плана район тултарса пыман, 1941 çулăн пĕрремĕш кварталĕнчи планне те тултарман, апрелĕн пĕрремĕш декадинче вара квартал планне 6,9 процент кăна тултарнă.

Первомайски районра бюджета 86,8 процент тултарнă. 1940 çулта социалла-культурăллă чылай мероприятисем валли исполком укçа-тенкĕ паман, çав вăхăтрах бюджет дохочĕсене пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе çителĕклĕ мерăсем йышăнман. Района пăхăнса тăракан промышленноçран 161 пин тенкĕ доход илмелле пулнă пулсан, 36 пин тенкĕ кăна илнĕ, вăрман дохочĕсене—298 пин тенкĕ вырăнне 182 пин тенкĕ илнĕ, суту-илӳрен илмелли доходсене 47 процент кăна пурнăçа кĕртнĕ, ялхуçалăх заготовкисенчен шутласа илмелли отчисленисене — 46 процент. Района 1940 çулта халăхран средствăсем пухмалли плана тултарман, 1941 çулти январĕн 1-мĕш çине ялти тӳлевсем тăрăх 120 пин тенкĕ ытла недоимкăсем куçнă. Кăçалхи пĕрремĕш квартал планне район 79,3 процент кăна тултарнă.

Уççăнах курăнать ĕнтĕ, 1941 çулти бюджета пурнăçа кĕртнĕ чухне эпир çакнашкал положение чăтса тăма пултараймастпăр. Бюджета пĕтĕм республика тăрăх кăна мар, ăна кашни район, хула, рабочи поселок, ялсовечĕ тăрăх, доходсен кашни уйрăм статьи тăрăх пурнăçа кĕртсе пымалла, бюджет тăрăх паракан средствăсемпе пĕтĕмĕшпех тата мĕнле ĕç валли пана çав ĕçре кăна усă курмалла.

II. 1941 çулти бюджетăн дохочĕсем

Чăваш АССР 1941 çулти бюджетне пĕтĕмпех халăх хуçалăх планĕпе килĕштерсе тунă. Вăл пирĕн республикăн хуçалăхĕпе культурин мĕнпур отраслисем малалла çĕкленсе пынине палăртса тăрать.

Халăх Комиссарĕсен Совечĕ бюджета 163.851,1 пин тенкĕлĕх палăртнă, вăл шутран—республика бюджечĕ тăрăх 57.393,8 пин тенкĕ. 1940 çултипе танлаштарсан доходсем 14.018,4 пин тенкĕлĕх е 9,3 проц. ӳсеççĕ.

Бюджетăн дохочĕсем çаксем пулаççĕ (пин тенкĕпе):

Доходсен источникĕсем	Сумма
МĔНПУР ДОХОДСЕМ	**163.851,1**
Вăл шутран:	
Оборотран илекен налогран уйăрса илни	81.491,0
Тупăшран уйăрса илни	10.775,3
Предприятисемпе организацисенчен илекен подоходнăй налог тата ытти налогсем	22.715,0
Халăхран илекен налогсемпе сборсем	29.001,0
Государство заемĕсенчен уйăрса илни	7.671,0

Çак даннăйсем—оборотран илекен налогран уйăрса илнисем, тупăшран уйăрса илнисем тата предприятисемпе организацисен ытти тӳлевĕсем республика бюджетĕнчи доход статьисенчен чи пысăк доходлă статьисем пулнине кăтартса параççĕ, вĕсем 114.981,3 пин тенкĕ пулаççĕ е пĕтĕм бюджетра 70,1 процент йышăнаççĕ.

Доходсен составĕ çавăн пек пулни бюджета пурнăçа кĕртессишĕн финанс орăнĕсем çине çеç мар, тата наркоматсен, предприятисен тата хуçалăх организацийĕсен руководителĕсем çине те пысăк ответлăх хурать.

ОБОРОТРАН ИЛЕКЕН НАЛОГ

Иртнĕ çулта оборотран илекен налогран бюджет валли 57.322,7 пин тенкĕ уйăрса илнĕ пулсан, кăçал 81.491 пин тенкĕ уйăрса илме палăртнă. Çак статья тăрăх доходсем çакнашкал ӳсни акă мĕнрен килет: пĕрремĕшĕнчен, 1941 çулта промышленноçлă предприятисем туса кăларакан продукци тата таварçаврăнăшĕ чылай ӳсет, иккĕмĕшĕнчен, ялхуçалăх налогĕнчен, колхозсенчен илекен подоходнăй налогран, государство заемĕсенчен вырăнти бюджетсем валли уйăрса парасси тата машинно-тракторнăй станцисен дохочĕсенчен уйăрса илесси сахалланать.

Государство дохочĕсем енĕпе ĕçсем республикăра юлашки вăхăтра кăштах лайăхланчĕç.

Оборотран илекен налога пухас плана 1941 çулти 1-мĕш кварталта 105 процент тултарнă. Плана 23 район ирттерсе тултарчĕç.

Çапах та эпир государство дохочĕсем тĕлĕшпе пурне те туса çитернĕ, тесе калама пултараймастпăр-ха. Оборотран илекен налога тĕрĕс шутласа хунине тата шутласа хунă суммăсем бюджета вăхăтра пырса кĕнине финанс орăнĕсем япăх контроллесе тăраççĕ, районсенчи тата хуласенчи советсен исполкомĕсем государство дохочĕсем енĕпе вĕсем мĕнле ĕçленине тата хуçалăх орăнĕсем государство умĕнчи финанс обязательствисене мĕнле тултарса пынине çителĕксĕр тĕрĕслесе тăраççĕ.

Час-часах çакăн пек те пулать: предприятисен, организацисен руководителĕсем финанс орăнĕсене налог отчетноçне вăхăтра тăратмаççĕ, налог шутласа хума тивĕçлĕ суммăна отчетра пӳр чухне те мар кăтартса параççĕ, хăйсем хуçасăрлăхла ĕçленипе пулакан хăйсен çитменлĕкĕсене государство бюджечĕн шучĕпе витсе хума хăтланаççĕ.

Етĕрнери çу çапакан завод руководителĕсем тăратнă расчетсем тăрăх оборотран илекан налога 4.013 пин тенкĕ шутласа хунă, тĕрĕслесе пăхсан заводăн бюджета 4084 пин тенкĕ пама тивĕçли курăнчĕ. Çапла вара, завод директорĕ Васильев юлташ государство средствисене 71 пин тенкĕ ӳкçа-на законсăр йĕркепе предприяти оборотне хăварнă.

Канашри аш-хакай комбиначĕ налог хумалли 82 пин тенкĕ, Сĕнтĕрвăрринчи «Портной» артель—99 пин тенкĕ оборота финанс орăнĕсенчен пытарса хăварнă. Государство дохочĕсем енĕпе ĕçлекен работниксем çакнашкал организацисене тĕрĕслесе тухсан, 1940 çулта оборотран илекен налога çĕнĕрен 1258 пин тенкĕлĕх шутласа хунă. Çакăнтан ĕнтĕ налог отчечĕсене тĕрĕслени мĕнле вырăн йышăнса тăни лайăх курăнать.

Торгплодоовощăн Шупашкар районĕнчи контори, Канашри «Швейник» артель, Çĕрпӳри горпо, Маслопроман Канашри бази государство дисциплинине тăтăмах пăсса пыраççĕ, вĕсем оборотран илекен налог укçине законпа туса палăртнă сроксенче хывмаççĕ. Государствăна хирĕçле çак практикăна татăклăнах чарса лартас пулать.

Хуçалăхлă организацисен руководителĕсене государство кăсъине кĕме ирĕк паман. Вĕсем государство интересĕсене çирĕплĕн пăхăнса тăма тивĕçлĕ.

Государство дохочĕсене ӳстерес ĕçре вырăнти хуçалăхри резервсемпе усă курни пысăк вырăн йышăнса тăрать.

ССР Союзĕн Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ 1941 çулти январĕн 9-мĕшĕнче «Вырăнти чĕртавартан куллен кирлĕ таварсем тата продовольстви туса кăларассине ӳстермелли мероприятисем çинчен» йышăннă постановлени вырăнсенче пуçарулăха вăйлатма тата вырăнти чĕртаварсен ресурсĕсемпе анлăн усă курма пур условисене те туса пачĕ.

Çав постановление пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе республикăри финанс орăнĕсем çине ответлă задача тивет. Вĕсем районăн экономикине тарăннăн пĕренмелле тата Спецбанксемпе, Государство банкĕн отделенийĕсемпе пĕрле халиччен ĕçлекен производствăсене анлăлатма тата çĕнĕрен тума парăкаш средствăсемпе тĕрĕс усă курнине сăнаса тăма тивĕçлĕ, вăл средствăсенчен усă ытларах курмалла пултăр.

ТУПĂШРАН УЙĂРСА ИЛЕССИ

Республика бюджечĕн доходсен пысăк çăлкуçĕ тупăшран уйăрса илни пулса тăрать. Государство предприятийĕсен (вăл шута районри промышленноçа та кĕртсе) накопленийĕсене 1941 çулта 18.902 пин тенкĕ палăртнă. Ку вăл 1940 çултинчен 62,0 процент ытларах пулать.

Уйрăмăнах апат-çимĕç тата çăмăл промышленность тăрăх накопленисем вăйлăн ӳсмелле.

1941 çулта бюджета тупăшран уйăрса пама 9.695 пин тенкĕ пăхнă, тупăшсен ытти пайĕ—9.207 пин тенкĕ тӳрремĕнех предприятисем çумне юлать, ăна капитальнăй ĕçсене тунă çĕре, норматива ӳстернĕ тата оборотри çитмен средствăсене витнĕ çĕре ямалла тата директор фондне памалла.

Çак цифрăсем накопленисен планне тултарас ыйту кашни наркомат, кашни предприяти директорĕ умĕнче мĕнле çирĕплĕн тăнине кăтартса параççĕ.

Накопленисен планне тултарасси — вăл производствăллă программăна, продукцин хăйне тума ларакан хакне чăкармалли задание пĕтĕмĕшпех тата пахалăлăхăн пурнăçа кĕртмеллине, производствăра ĕç тухăçне хăпартмаллине, предприятисенчи продукци туса кăларнă çĕрте простойсем тата брак тумалла маррине пĕлтерет.

Пирĕн нумай предприятисен ĕçĕ çак требованисен виçинче тăрать-и-ха? Çук, тăрăмасть. Бюджетăн доход пайне пурнăçа кĕртни çинчен каланă чухне эпĕ уйрăм наркоматсемпе предприятисем 1940 çулта çителĕксĕр ĕçленине илсе кăтартрăм. Ĕç халĕ мĕнле тăрать-ха? Тӳрех калас пулать, хăшпĕр предприятисем кăçал та начар ĕçлеççĕ.

Пример вырăнне Шупашкарти леспромхоза (малтан Гортоп пулнăскерне) илĕпĕр. 1940 çулта вăл производствăллă программăна мĕнпурĕ те 21,7 процент кăна тултарнă. Вутă хатĕрленĕ çĕрте ĕç тухăçлăхĕ çавтери пĕчĕккĕ пулнă, планпа пăхнинчен 60 процент кăна шутланнă. Планпа пăхман çухатусем 800 пин тенкĕ ытла пулнă. Леспромхоз пĕр йывăçсена çĕртсе янипе кăна 222 пин тенкĕлĕх тăкак тунă. Расценкăсене пăснă. Ку леспромхозра питех те тĕлĕнмелле ĕçсем пулса тăнă. Леспромхоз руководителĕсем Михайловски участок тума шутланă, участок тунă пулсан, ăна валли начальник кирлĕ. Начальник тупнă. Участока счетнăй работниксене янă. Акă ĕнтĕ вĕсем пурте унта пĕр уйăх, иккĕмĕш, виççĕмĕш уйăх пурăнаççĕ, ĕçукçине вăхăтра илсе тăраççĕ тата пурте вутă мĕнле хатĕрлемелли çинчен шутлаççĕ. Шутланă, шутланă, анчах нимĕн те шухăшласа кăларма пултарайман. Çулталăк иртнĕ, участок пĕр кубометр та вутă хатĕрлемен. Çакна пула леспромхоз 99 пин тенкĕ тупăш илес вырăнне çулталăка 536 пин тенкĕ убыток тӳснипе вĕçленĕ. Шутпала, Топливо промышленность Управлени начальникĕн çакăнтан тивĕçлĕ выводсем тумалла пулнă тата леспромхозри ĕçсене лайăхлатас тĕлĕшпе татăклă мерăсем йышăнмалла пулнă. Анчах вăл ăна туман. Леспромхоз кăçал та пит начар ĕçлет.

Сĕнтĕрвăрринчи спиртзаводра та хуçасăрлăх пурринне палăртнă. 1940 çулта ку завод вутă 5660 кубометр ытлашши çунтарнă, çĕрулминне турттарса пынă чухне тата ăна лайăх пăхса усраман пирки 339 тонна сая кайнă, штрафсем кăна 480 пин тенкĕ тӳленĕ. Хуçасăрлăх, простойсем пулни, ĕç тухăçлăхĕ пĕчĕккĕ пулни продукцин хăйне тума ларакан хакĕ планпа пăхнинчен 14,8 процент чухлĕ ӳсесси патне илсе пынă, завод тупăш илес вырăнне çулталăка 429 пин тенкĕ убыток тӳснипе вĕçленĕ.

Шупашкарти электростанцинче материалсемпе оборудовани ним йĕркесĕр сапаланса выртаççĕ. Çакăн пек хаклă оборудовани, сăмахран, арматура, трубасем, дизельсен фасонăй поршнисем, трансформаторсем, уçă çĕртех выртаççĕ, вĕсем юр айĕнче. Хуçасăрлăха пула 15 тонна ытла цемент юрăхсăра тухнă. Коммуналлă хуçалăх Халăх Комиссарĕ Новиков юлташ çак электростанцинче темиçе хутчен те пулнă вĕт-ха.

1940 çулта МТС-сенчен чылайăшсем çителĕксĕр ĕçленĕ, тракторпа ĕçлессине планне тултарайман.

Хăшпĕр МТС-сенче хуçасăрлăх питĕ нумай. Çĕрпӳри МТС горючи тĕлĕнтерекăна 66 пин тенкĕ, Чкаловски МТС—45 пин тенкĕ ытлашши расходланă. 1940 çулта тракторсене тата ялхуçалăх машинисене ремонтлас тĕлĕшпе Улатăр МТС-ĕнче 56 пин тенкĕ, Куславкка МТС-нче 75 пин тенкĕ, Пăрачкав МТС-нче 88 пин тенкĕ планпа пăхнинчен ытлашши расходланă.

Илĕртĕва Вăрнарти машинно-тракторнăй станцине. Ку МТС 1940 çулта хăйĕн мĕнпур ĕç планне 117,5 процент тултарнă, нимĕнле ытлашши расход та туман, çапла вара вăл 1940 çула 83.800 тенкĕ тупăш илнипе вĕçленĕ.

Учет ĕçĕ нумай МТС-сенче япăх. Наркомзем тракторсене тата ялхуçалăх машинисене ремонтлама илнĕ 179 пин тенкĕ укçана МТС-сене валеççе паманнине кăтартакан факта учет ĕçне япăх туса пынипе тата ĕçĕн чăн-чăн положенине пĕлменнипе çеç ăнлантарма пулать.

Наркомфин тата государство банкĕн орăнĕсем енчен машинно-тракторнăй станцисем средствăсемпе мĕнле усă курса пынине тĕрĕслесси çителĕксĕр пулса пырать.

Кун пек примерсем татах та пур. Ытти предприятисенче те государство средствисене тирпейсĕр тытăкланă фактсем темĕн чухлех.

«Хуçалăха çавăн пек типтерсĕр тытса пыни халăх интересне хирĕçле пулса тăрать,—тесе каланă Маленков юлташ партин XVIII конференцийĕнче.—Унпа пирĕн социализмлă хуçалăх хушшинче пĕрлехи нимĕн те çук, социализмлă хуçалăхра кашни пус укçана, топливăн, чĕртаварăн кашни килограмне, кашни агрегата тата станока çавтери çирĕплĕн шута илсе, вĕсенчен усă илме тăрăшни кирлĕ».

Продукцин хăйне тума ларакан хакĕ производство ĕçне кăтартакан чи тĕрĕс барометр пулса тăрать. Предприятисен, хуçалăхлă организацисен руководителĕсен хозрасчета тата финанс дисциплинине çирĕплетессишĕн, хуçасăрлăха хирĕç, продукци пахалăхĕшĕн вăйлăн кĕрешмелле.

ХАЛĂХРАН ИЛЕКЕН НАЛОГСЕМ ТАТА СБОРСЕМ

Бюджет дохочĕсен тĕп статьисем предприятисемпе организацисенчен илекен тӳлевсем пулса тăни çинчен каланăччĕ. Халăхран илекен налогсемпе сборсен удельнăй виçи пысăках мар. Вĕсем тăрăх бюджета кĕмелли пĕтĕм суммăна 29.001 пин тенкĕ палăртнă, вăл бюджетăн пĕтĕм пысăккăшĕпе танлаштарсан мĕнпурĕ те 17,7 процент кăна пулать.

Анчах, доходăн çак çăлкуçĕн пĕлтерĕшне республика бюджечĕн пĕтĕм сумминчи удельнăй виçи тăрăх палăртни тĕрĕс мар пулнă пулăччĕ. Унăн удельнăй виçи пысăках мар, анчах политика тĕлĕшĕнчи пĕлтерĕшĕ пысăк.

Халăхран илекен налогсемпе сборсем ĕçсыннисен йышлă массисене çавăрса илеççĕ, çавăнпа та налог ĕçĕ çине хуласенче те тата ялсенче те питех те тимлĕн çавăрнса пăхас пулать.

Чăваш АССР Верховный Совечĕн III-мĕш Сессийĕнче депутатсем халăхран налог пухас тĕлĕшпе финанс орăнĕсен пысăк çитменлĕхсем пуррине кăтартса пачĕç. Депутатсен çак тĕрĕс кăтартăвĕсене Наркомфин шута илнĕ.

Республикăри финанс орăнĕсем 1940 çулăн иккĕмĕш çурмаçулĕнчен пуçласа налог ĕçне лайăхлатрĕç. Халăхран укçа-тенкĕ пухмалли плана III-мĕш кварталта 119 процент, IV-мĕш кварталта 108,1 процент тултарнă. 1941 çулти I-мĕш квартал планне Наркомфинăн тӳлевсем тăрăх 105,6 процент тултарнă. Недоимка чылаях чакрĕ.

Анчах, çак лайăхрах процентсем хыçĕнче налог ĕçĕнчи пысăк çитменлĕхсем те пытанса тăраççĕ.

Хăшпĕр районсенчи финорăнсем халĕ те çителĕксĕр ĕçлеççĕ-ха, финанс планне тултармаççĕ. Хĕрлĕ Чутай районĕ çак çулти пĕрремĕш квартал планне 74,4 процент кăна тултарнă, Чкаловски район 91,3 процент, Пăрачкав район—92,9 процент тултарнă.

ССР Союзĕн Совнаркомĕпе ЦК ВКП(б) 1938 çулти апрелĕн 19-мĕшĕнче «Единоличниксен хуçалăхĕсем çине хуракан налогсемпе ытти обязательствăсем çинчен» йышăннă постановление финанс орăнĕсем пурнăçа çителĕклех кĕртсе пымалла тăвайман-ха, хăшпĕр районсенче ку енĕпе единоличниксла хуçалăхсене хӳтлесе государствăна хирĕçле ĕç тăваççĕ. Ун пек районсен шутне Калинински, Первомайски, Советски, Йĕпреç тата Шупашкар районĕсем кĕреççĕ.

Первомайски, Йĕпреç, Çĕмĕрле районĕсенчи райфинпайсемпе райсоветсен исполкомĕсем нимĕн сăлтавсăрах недоимкăсене шыраса илмелле мар тăваççĕ, налог законодательствине пăсаççĕ.

Çакăн пек тĕслĕхсем те сахал мар пулаççĕ: Наркомфин работникĕсем районсене кайсан унта финанс ĕçĕ мĕнле тăнине тĕплĕн анализ тумаççĕ, райфинпайсен ĕçĕнчи çитменлĕхсене ӳçса палăртмаççĕ тата, ӳçса палăртсан та, вĕсене вырăнта пĕтерме тăрăшмаççĕ.

(Малалли 3-мĕш страницăра).

ЧĂВАШ АССР 1-мĕш СОЗЫВРИ ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН V СЕССИЙĔ

Ф. Т. СЕМЕНОВ ЮЛТАШ ДОКЛАЧĔН МАЛАЛЛИ

Финанс аппаратĕнче плана пурнăçа кĕртессишĕн большевикла кĕрешнин тĕслĕхĕсене кăтартакан лайăх работниксем те сахал мар.

Сăмахран, çакăн пек налог агенчĕсем: Калинински районри Чăваш Хирлеш ялсоветĕнчи Степанов юлташ, Красноармейски районри Типçырма ялсоветĕнчи Семенов юлташ, Елчĕк районĕнчи Ишмураино-Суринский ялсоветри Бикмухаметов юлташ, Элĕк районĕнчи Изванка ялсоветĕнчи Тарасов юлташ тата ытти нумай юлташсем халăхран укçа-тенкĕ пухмалли плана квартал-тан квартала тултарса пыраççĕ, вĕсен недонимкăсем çук. Вĕсене ялсоветсен председателĕсем те лайăх пулăшаççĕ. Налог агенчĕсен пурин те çавăн пек ĕçлемелле.

СССР Верховный Совечĕн VIII-мĕш Сессийĕ колхозсенчен илмелли подоходнăй налог çинчен çĕнĕ закон йышăнчĕ, ялхуçалăх налогĕ çинчен калакан закона улшăнусем кĕртрĕ. Çак законсем политика тĕлĕшĕнчен тата халăх хуçалăхĕшĕн пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ. Çĕнĕ законсем тăрăх колхозсем çине подоходнăй налог тата халăхсем çине ялхуçалăх налогĕ хуни налог тӳлекенсен ответлăхне те тата финанс органĕсен ответлăхне те хыттăн ӳстерет. Финанс органĕсен çав законсем çинчен халăхсене анлăн ăнлантарса памалла тата вăл законсене пурнăçа тĕрĕс кĕртмелле тумалла. Вĕсен доходсене тĕрĕс шута илмелле, налогсене тĕрĕс шутласа хумалла кăна мар, тата налог укçине вăхăтра пухассине те пурнăçламалла.

ГОСУДАРСТВО ЗАЕМĔСЕМ ТАТА ПЕРЕКЕТ КАССИСЕНЕ ХУРАКАН ВКЛАДСЕМ

Халăх хуçалăхĕпе культури пĕрмаях хăпарса пыни, унпа пĕрлех тата ĕçлыннисен материаллă пурнăçĕ лайăхланса пыни халăх перекечĕсене ӳстерме шит лайăх условисем туса пачĕç.

Виççĕмĕш Пятилетка (виççĕмĕш çулти кăларăм) Заема Чăваш АСС Республики тăрăх 244 пин çын, пурĕ 20916 пин тенкĕлĕх сыпăннă. Çакă вăл 1939 çулти подписка сумминчен 3.952 пин тенкĕ ытларах пулать. Колхозăлă ялта та заем сыпăнасси чылаях ӳсрĕ. Пирĕн республикăри колхозниксем 1939 çулта 3.083 пин тенкĕлĕх заем сыпăнса илнĕ, 1940 çулта 4.488 пин тенкĕлĕх сыпăннă.

Кашни рабочи, колхозник, служащи çакна лайăх пĕлсе тăраççĕ: государство заемĕсене хывнă средствăсем пирĕн çĕршывра социализм строительствине укçа-тенкĕ парса тăнă çĕре, çĕршыв обороннине вăйлатнă çĕре, совет çынни-сен пурнăçне лайăхлатнă çĕре каяççĕ.

Пирĕн государство заемĕсемпе перекет кассисем халăхсене чылай пысăк доходсемех параççĕ. 1940 çулта Чăваш республикинчи перекет кассисем государство заемĕсем тăрăх выигрышсемпе процентсем 1.998 пин тенкĕлĕх, вкладсен процинчĕсене 474 пин тенкĕлĕх тӳленĕ. Çакă вăл хăйсен укçи-тенкине заемсем урлă государствăна пани тата перекет кассисенче тытса усрани ĕçлыннисемшĕн мĕнле усăллине уççăн кăтартса парать.

Пирĕн çĕршывра государство заемĕсем финанс системинче тăçанах паллă вырăн йышăннă.

1941 çулта государство заемĕсенчен уйăрса илнине бюджета 7.671 пин тенкĕ пырса кĕме палăртнă, 1940 çулта 8.110 пин тенкĕ палăртнă пулнă. Çак сумма 1940 çултинчен кăштах пĕчĕкленни рабочисемпе служащисем заем сыпăнса илнĕ суммăсенчен вырăнти бюджетсене уйăрса парасси 25 процентран 15 процента çити чакнинчен килет.

Пирĕн перекет кассисене хуракан вкладсем те пысăк вырăнта тăраççĕ. Юлашки пилĕк çул хушшинче кăна республикăри перекет кассисене вкладсем 13.918 пин тенкĕ хунă. 1935 çулти январĕн 1-мĕшне республика тăрăх вкладсен вăтам сумми 100 тенкĕ пулнă пулсан, 1941 çулти январĕн 1-мĕшне вăл хисеп 333 тенкĕ шутланать. Чăваш АСС Республикинчи перекет кассисенче халăхсем хунă вкладсен юлашкийĕ халăхи вăхăтра 17 миллион тенкĕрен иртет.

Анчах, калас пулать, перекет кассисем çаплах çителĕксĕр ĕçлеççĕ-ха, вкладсем ытларах пырса кĕмелле тăвас тĕлĕшпе вĕсем пур майсемпе те усă курмаççĕ-ха. Оперативлăх çителĕксĕр пулни, вырăнсенчи перекет кассисен ĕçне контроль туса тăманни тата вĕсене пулăшманни—акă мĕнре районсенчи нумай перекет кассисен руководителĕсен тата Управленин хăйĕ-ĕçĕнчи çитменлĕхсен сăлтавĕсем. Перекет кассисенчи работниксен вкладсем шутне ӳстерес тĕлĕшпе предприятисенче, учрежденисенче организаторлă тата агитациллĕ ĕçе анлăн туса пымалла, вкладчиксемпе тата заем тытакансемпе ĕçлессине лайăхлатмалла, перекет ĕçĕ çинчен пĕлсе пропагандăламалла.

ГОСУДАРСТВО СТРАХОВАНИЙĔ

1941 çулта республика бюджечĕ валли обязательнăй окладной страховани тăрăх кĕрекен суммăсенчен 2.150 пин тенкĕ уйăрса илме пăхнă. Çак средствăсем пĕтĕмĕшпех пушарпа тата выльăхсем вилессипе кĕрешес ĕçе, ветеринари лечебницисемпе пушар деповĕсен строительствипе вĕсене юсас ĕçе каяççĕ.

Государство страхованийĕ колхозсене организацине хуçалăх тĕлĕшĕнчен çирĕплетес çĕрте питех те пысăк вырăн йышăнса тăрать. 1940 çулта Чăваш АССР тăрăх обязательнăй окладной страховани енĕпе колхозсемпе колхозниксен пурлăхĕсене, инкек-синкек пуласран 749 миллион тенкĕлĕх страхланă. Çав çулхине Госстрах органĕсем страховой убытоксемшĕн 6.905 пин тенкĕ тӳленĕ. Куратăр ĕнтĕ, çакă вăл инкек-синкек пулнипе сиен курнă колхозсемпе хуçалăхсене пысăк пулăшу пани пулать.

Госстрах органĕсем юлашки вăхăтра хăйсен ĕçне кăштах лайăхлатрĕç. Ирĕклĕ страховани тăрăх 1941 çулти пĕрремĕш квартал планне 129,9 процент тултарнă. Окладной страховани ĕçне те ытла начарах мар иртернĕ. Нумай районсем, сăмахран, Улатăр, Елчĕк тата ыт. те, страховани ĕçĕ енĕпе лайăх тĕслĕхсем кăтартрĕç. Анчах государство страхованийĕн органĕсен ĕçĕнче пысăк çитменлĕхсемех пур. Страховой вознаграждени укçине вăхăтра паманни, убытоксемшĕн тĕрĕс мар тӳлени пулкалать. Государство страхованине, уйрăмăнах, ĕçлыннисен материаллă пурнăçĕ лайăхлансах пынă май, пурлăхсене ирĕклĕн страхлас ĕçе вăйлă аталантарма калама çук пысăк майсем пур, анчах страховой работниксем çак майсемпе пĕтĕмĕшпех мар усă кураççĕ.

Чылай районченĕ—Куславкка, Чкаловски, Шăмăршă районĕсенче—колхозсенче ирĕклĕн страхлас ĕçе пачах çителĕксĕр туса пырaççĕ.

Страховой работниксен задачи—хăйсен пурлăхĕсене тата пурнăçне страхлакансемпе ĕçлессине хыттăнах лайăхлатмалла, çитменлĕхсене хăвăрт пĕтермелле, çапла вара государство страхованийĕн ĕçне малалла илсе пымалла.

III. 1941 çулти бюджетăн расхочĕсем

Чăваш АССР расхочĕсен пĕтĕм пысăкăшне Халăх Комиссарĕсен Совечĕ 1941 çул валли 163.851,1 пин тенкĕ палăртнă, 1940 çулта 126.141,7 пин тенкĕ пулнă. Иртнĕ çултипе танлаштарсан, расходсем 17.709,4 пин тенкĕ е 13,1 процент чухлĕ ӳсеççĕ.

Пирĕн бюджет расхочĕсен структурине çак показательсем кăтартса тăраççĕ (пиншер тенкĕпе):

Расходсен ячĕсем	1940 çулта пурнăçа кĕртнĕ	1941 çулти план	Ӳсĕм	
			Сумма	Процентпа
Халăх хуçалăхĕ	24.893,5	32.509,8	7.616,3	30,5
Социаллă-культурăллă мероприятисем	97.643,7	108.694,7	11.051,0	11,3
Управлени	21.127,9	19.628,5	—1.499,4	—7,3
Ытти расходсем	24.076,6	3.018,1	541,5	21,9
Мĕнпурĕ расходсем	146.141,7	163.851,1	17.709,4	12,1

Çак даннăйсенчен курăнать ĕнтĕ: бюджетăн мĕнпур расхочĕсенчен 141 миллион ытларах тенки е 86,2 процентĕ хуçалăха тата социаллă-культурăллă мероприятисене укçа парса тăнă çĕре каять.

Средствăсене çавăн пек çĕре расходлани республикăн 1941 çулти халăх хуçалăх планĕнчен, Сталинла виççĕмĕш пятилеткăн тăваттăмĕш çулĕнчи задачисенчен тухса тăрать, тата Чăваш АСС Республикин хуçалăхĕпе культурине çĕнĕ çĕклеме тума май парать.

ХАЛĂХ ХУÇАЛĂХĔ ВАЛЛИ УКÇА-ТЕНКĔ ПАРСА ТĂРАССИ

1941 çулта бюджет тăрăх халăх хуçалăхне укçа-тенкĕ парса тăрас ĕç валли 32.509,8 пин тенкĕ палăртнă. Çакă вăл 1940 çултинчен 7.616,3 пин тенкĕ нумайрах. Халăх хуçалăхĕнче тумалли расходсене палăртнă чухне хуçалăх организацийĕсен хăйсен накоплени-йĕсем ӳсинне тата капитальнăй строительствăра шалти ресурссене мобилизацилессине шута илнĕ.

Халăх хуçалăхĕн уйрăм отраслисем тăрăх средствăсем çак ĕçсене каяççĕ:

	1940 çулта пурнăçа кĕртнĕ	1941 çулти план	Усĕм (процентпа)
Промышленность	12.608,8	19.411,4	53,9
Ялхуçалăх	4.820,8	5.197,3	7,3
Коммуналлă хуçалăх	5.344,1	5.570,9	4,2
Сутуилтӳ	595,9	641,0	7,5
Транспорт тата сыхăну	232,5	389,2	67,0
Çулĕĕр хуçалăхĕ	1.291,4	1.300,0	0,6
Пĕтĕмпе:	24.893,5	32.509,8	30,5

Çулăт-симĕс промышленноçĕпе Наркомлес промышленноçĕ тăрăх уйрăмах пысăк ӳсĕм тума палăртнă.

Бюджет расхочĕсен пĕтĕм сумминче капитальнăй строительствăна укçа-тенкĕ парса тарасси чылаях пысăк вырăн йышăнать.

КАПИТАЛЬНĂЙ СТРОИТЕЛЬСТВО

1941 çулта Чăваш АССР ведомствине кĕрекен хуçалăх тăрăх лимитлă строительство йĕркипе тăвакан капитальнăй ĕçсем валли укçа-тенкĕ парса тăнă 5.711 пин тенкĕ йышăннă, вĕсенчен 4.197,4 пин тенки бюджет средствисемпе витĕнет, ытти 1.513,6 пин тенки — хуçалăх организацийĕсен хăйсен накоплени-йĕсен шучĕпе.

Анчах та, çак вăл мĕнпур капитальнăй расходсене палăртса тăмасть. Çакăнта кăтартнă суммăсемсĕр пуçне, лимитсăр йĕркепе 12.312,2 пин тенкĕ расход пулать тата банксенчен илекен ссудăсем шучĕпе чылаях пысăк расходсем тума палăртнă.

Республикăри районсенче 1941 çулта çĕнĕрен 116 предприяти туса ĕçе яма палăртнă.

Калас пулать, хăшпĕр отраслĕсем тăрăх строительство çителĕксĕр пурнăçа кĕрсе пырать.

1940 çулта Промбанкăн Чăваш контори енĕпе укçа-тенкĕ парса тăракан объектсем тăрăх строительство ĕçĕсен планне 76,5 процент кăна тултарнă. Коммунальнăй банк укçа-тенкĕ парса тăракан объектсем тăрăх—60 процент тата Торгбанк укçа-тенкĕ парса тăракан объектсем тăрăх—69 процент.

Чĕртаварăн питех те пуян ресурсĕсем пур пулсан та, нумай райсоветсен исполкомĕсем вырăнти промышленноçа вăйлатас ĕçре пуçарулăх кăтартмаççĕ тата строительство ыйтăвĕсене халĕ те иккĕмĕш вырăнта тăракан ĕç вырăнне хураççĕ.

Пуринпĕн те паллă, вырăнти чĕртавартан куллен кирлĕ таварсемпе продовольстви туса кăларас ĕçе организацилеме тата вăйлатма Госбанкпа Промбанк кашни предприяти валли 1—3 çуллăха 500 пин тенке çити кивçен укçа параççĕ. Анчах та пирĕн çав кредитсемпе усă курмаççĕпе пĕрех. 1941 çулăн пĕрремĕш кварталĕнче Промбанкран Çĕмĕрлепе Канаш районĕсем кăна кивçен укçасем илнĕ. Районсенчен нумайĕшĕсем—Улатăр, Хĕрлĕ Чутай, Етĕрне районĕсемпе ытти районсем Госбанкран та, Промбанкран та пĕр тенкĕ те кивçен илмен, çакă вăл пĕтĕмĕшпех райсовет исполкомĕсен хăйсен ăйăпĕпе çапла пулнă.

Калинински райсовет исполкомĕн 1940 çулта сĕтел-пукан мастерскойĕ туса ĕçе ямалла пулнă. Мĕнле пынă-ха çак строительство? Мастерской строительстви валли кирлĕ площадкăна райсовет исполкомĕ сентябрĕн 25-мĕшĕнче кăна уйăрса панă, строительство çинчен тăракан ыйтăва вара çулталăк пуçламăшĕнчех татса панă пулнă. Мастерской тума панă 150 пин тенкĕрен 46 пин тенкипе кăна усă курнă, çав вăхăтрах Промбанк счечĕсем çинче 1941 çулти январĕн 1-мĕш тĕлне ĕçе кайман средствăсен юлашкийĕсем 70 пин тенкĕ ытла пулнă. Мастерской строительствинче хальхи вăхăтра шут тăрăх виççĕмĕш начальник ĕçлет. Райсовет исполкомĕ тата унăн председателĕ Иванов юлташ строительствăна туса пĕтерме кирлĕ мерăсем йышăнман. Мастерскоя халиччен те туса пĕтермен-ха.

Ишлей, Чкаловски районсенче тата республикăри ытти хăшпĕр районсенче те строительство çителĕксĕр пулса пырать.

Канаш райсовечĕн исполкомĕ районри промышленноçа вăйлатма панă средствăсенчен 187 пин тенкипе пĕтĕм бюджет нушисем валли расходласа пĕтернĕ.

Ĕçсем Йĕпреçпе Çĕмĕрле районĕсенче те çакнашкалах. Вырăнти промышленность Халăх Комиссарĕ Васильков юлташ та строительствăна начар ертсе пырать.

Строительство хакĕ халĕ те тивĕçсĕр пысăк-ха. Чылай стройкăсенче простойсем нумай пулаççĕ, стройматериалсемпе рационально мар усă кураççĕ, ĕçшĕн тӳлес ĕçре расценкăсене пăсаççĕ, çакна пула строительство хакĕ тивĕçсĕр ӳссе каять.

Хăшпĕр районсенче ялсемпе хуласенчи шкулсен строительстви пачах çителĕксĕр пулса пырать. Сăмахран, Калинински районри Чăваш Хирлеприн шкула 1938 çултанпа, Красноармейски районри Упи шкулне—1937 çултанпа тăваççĕ.

Çапла ыйтма юрать: райсоветсен исполкомĕсен председателĕсемпе Наркомпрос çак шкулсене тата миçе çул тума шутлаççĕ-ши?

ОБОРОТ СРЕДСТВИСЕМ ВАЛЛИ УКÇА-ТЕНКĔ ПАРСА ТĂРАССИ

1941 çулта правительство оборот средствисене 5.601,5 пин тенкĕ чухлĕ ӳстерме палăртнă, кунсăр пуçне хуçалăх организацийĕсен çителĕксĕр оборот средствисене витме 2.631,7 пин тенкĕ пама палăртнă. Çапла ĕнтĕ, хуçалăх организацийĕсен пурнăçа кĕртмелли оборот средствисен пĕтĕм суммине 8.233,2 пин тенкĕ йышăннă.

Çак средствăсен çурри ытларах пайне—5.515,9 пин тенкине бюджет средствисен шучĕпе витмелле, ытти пайне—2.717,3 пин тенкине хуçалăх организацийĕсен хăйсен накоплени-йĕсен шучĕпе витмелле.

Оборот средствисемпе мĕн май килнĕ таранах лайăх усă курассишĕн хуçалăх органĕсен руководителĕсем тӳррĕмех ответлă пулса тăраççĕ. Çапла пулсан та наркоматсемпе предприятисем çав средствăсемпе вырăнсăр усă курни сайра мар тĕл пулать.

1940 çулта оборот средствисен 538 пин тенкипе законсăр йĕркепе усă курнă, вăл шутра Наркомпищепром предприятийĕсем тăрăх—189 пин тенкĕ тата Наркомлес предприятийĕсем тăрăх—103 пин тенкĕ законсăр йĕркепе расходланă.

Макарон фабрики оборот средствисенчен 68 пин тенкине капитальнăй строительство ĕçĕнче расходланă, Крахмалтрест çак ĕçсенчех 49 пин тенкĕ, Ивановăри кирпĕч завочĕ—31 пин тенкĕ расходланă.

Оборот средствисемпе тĕрĕс мар усă курасси чылай предприятисенче çав средствăсене хуçалăхра рационально мар вырнаçтарса тухнипе пулса пырать.

1940 çулти отчетсем çакна кăтартса параççĕ: таварлă-материаллă хаклăхсен чăннипе пулнă юлашкийĕсем палăртса çирĕплетнĕ нормативсенчен чылай пысăкрах. 1941 çулти январĕн 1-мĕш тĕлне чĕртаварсемпе материалсен нормативран иртсе каякан запасĕсем пĕр промышленноçлă наркоматсем тăрăх кăна 1.490 пин тенкĕлĕх пулнă. Наркомпищепром предприятийĕсем тăрăх вĕсем 460 пин тенкĕлĕх ытла пулнă.

Шупашкар хулинчи Промкомбинатăн директорĕ Делицын юлташ финанс ĕçĕнчи йывăрлăхсем çинчен калать. Анчах çак комбинатра мĕн куратпăпа эпир? Комбинат хăйĕн оборот средствисене чĕртаварпа продукцин ытлашши запасĕсем çинче тытса тăрать. 1940 çул валли Промкомбината таварлă-материаллă хаклăхсен нормативне 425 пин тенкĕлĕх çирĕплетсе панă, анчах та 1940 çулти январĕн 1-мĕш тĕлне унăн çав хаклăхсем 588 пин тенкĕлĕх пулнă, апрелĕн 1-мĕш тĕлне—614 пин тенкĕлĕх, июлĕн 1-мĕш тĕлне—883 пин тенкĕлĕх, 1941 çулти январĕн 1-мĕш тĕлне—828 пин тенкĕлĕх, 1941 çулти февралĕн 1-мĕш тĕлне—932 пин тенкĕлĕх. Паллах ĕнтĕ, оборот средствисене хуçалăхра çакăн пек вырнаçтарса тăма юрамасть. Чĕртаварпа материалсен запасĕсене, нормативран иртсе каякан çакăн пек пысăк запассене туса хурса, директор Делицын мĕн шухăшланăшши? Ăçта пулнă-ши хула Совечĕпе Наркомместпром? Комбинат вĕсемпе юнашарах вырнаçса тăрать вĕт.

Чĕртаварпа материалсен ытлашши запасĕсем средствăсене усăсăр выртаççĕ, финанс ĕçĕнче йывăрлăхсем кăларса тăратаççĕ, предприятисен ĕçĕнчи йĕркеллĕ ритма пăсаççĕ.

Чĕртаварăн тата таварлă-материаллă хаклăхсен нормативран иртсе каякан запасĕсене туса хурас практикăна татăклăнах пĕтерес пулать. Наркоматсем руководительсем предприятисенчи чĕртаварпа материалсен запасĕсене хăйсем валли çирĕплетнĕ нормативсемпе йăлтах килĕштерсе тума, оборот средствисемпе тĕрĕс усă курнине тăтăшах контроллесе тăрас ĕçе йĕркелесе яма тивĕçлĕ.

СОЦИАЛЛĂ-КУЛЬТУРĂЛЛĂ МЕРОПРИЯТИСЕМ ВАЛЛИ УКÇА-ТЕНКĔ ПАРСА ТĂРАССИ

Депутат юлташсем! Культура строительстви ыйтăвĕсем çине совет государстви яланах тимлĕх çаврăнса пăхнă тата малашне те вĕсем çине тимлĕх пăхĕç.

Чăваш АСС Республикин 1941 çулти бюджечĕ социаллă-культурăллă ĕçсем валли 108.694,7 пин тенкĕ пама палăртать, е вăл бюджетри пĕтĕм расходсен 66,3 процентĕ пулать.

1940 çултипе танлаштарсан çак расходсем 11.051 пин тенкĕ чухлĕ ӳсеççĕ, 1932 çултипе танлаштарсан вĕсем 7 хут ӳсеççĕ.

Социаллă-культурăллă мероприятисен уйрăм отраслисем тăрăх средствăсем мĕнле ĕçсене кайнине çак цифрăсем кăтартса параççĕ (пиншер тенкĕпе):

Расходсем	1940 çулта пурнăçа кĕртнĕ	1941 çулти план	Ӳсĕм
Халăха вĕрентес ĕç	73.103,4	77.020,1	3.916,7
Сывлăха сыхлас ĕç	22.864,0	29.637,6	6.773,6
Физкультура	170,1	252,0	81,9
Социальнăй обеспечени	1.506,2	1.785,1	278,9
Пĕтĕмпе:	97.643,7	108.694,7	11.051,0

Социаллă-культурăллă ĕçсенче тăвакан расходсен çурри ытларах пайĕ, иртнĕ çулсенчи пекех, халăха вĕрентес ĕçе каять. 1941 çулта вĕсем 77.020,1 пин тенкĕ е пĕтĕм бюджет суммин 47 процентĕ шутланаççĕ. Пуçламăш, тулăмар вăтам тата вăтам шкулсене тытса тăрас ĕç валли 1940 çулта 43.482 пин тенкĕ панă пулсан, кăçалхи çул 45.891 пин тенкĕ пама палăртнă.

Халăха вĕрентес ĕç валли çакăн чухлĕ средствăсем пани партин XVIII съезчĕ лартнă задачăран—виççĕмĕш пятилеткăра хуласенче пурне те вунă çул вĕрентес тата ялсемпе мĕнпур нацциллĕ республикăсенче пурне те çичĕ çул вĕрентессине туса çитерес задачăран тухса тăрать.

1941—42 вĕренӳ çулĕнче пирĕн республикăри шкулсенче 188,4 пин çын вĕренмелле пулать. 5—7-мĕш, 8—10-мĕш классенче вĕренекенсен хисепĕ 71,7 пин çынран 80,4 пин çынна çити ӳсет. Шкул çулне çитмен ачасем хушшинче ĕçленипе, çитĕнимсем хушшинче политикăллă çутăлăх ĕçĕнче тата пĕтĕмĕшле образовани парас ĕçре пулакан расходсем те ӳсеççĕ.

Партипе правительство ĕççыннисен сывлăхĕшĕн калама çук пысăк тимлĕхпе тăрăшаççĕ. 1941 çулта Совнарком сывлăха сыхлас ĕçре 29.637,6 пин тенкĕ расход тума йышăннă. Çакă вăл 1940 çулта расходланинчен 29,6 процент нумайрах.

Сывлăха сыхлас ĕçре пулакан расходсем çакăн пек ӳсни лечебнăй учрежденисен хисепĕ, хуласемпе ялсенчи больницăсенчи койкăсен хисепĕ ӳснинчен тухса тăнă.

1940 çултипе танлаштарсан, лечебнăй учрежденисене капитальнăй ремонт тунипе тухакан расходсем икĕ хут ӳсеççĕ.

Социальнăй обеспечени енĕпе тăвакан расходсем те чылай ӳсеççĕ. 1940 çулта социальнăй обеспечени наркоматăн учрежденийĕсене тытса тăрас ĕçре, пенсисемпе пособисем парас ĕçре 1.506,2 пин тенкĕ расход туни пулсан, 1941 çулта çак ĕçсенче 1.785,1 пин тенкĕ расход тума палăртнă.

Халăха вĕрентес тата сывлăха сыхлас ĕç валли çулсеренех пысăк суммăсем параççĕ. Çак средствăсемпе тĕрĕс тата ăçта кирлĕ çавăнта кăна усă курни питех те пысăк вырăн йышăнса тăрать. Наркомпроспа Наркомздравăн чылай районсенчи учрежденийĕсен финанс хуçалăхĕсене тĕрĕслесе пăхни çакна кăтартса парать: çак ĕçре пурте марта лайăх. Пăрачкав районĕнчи вăтам шкулсен директорĕсем вĕренӳ пособийĕсем валли палăртса çирĕплетнĕ нормативсенчен чылай пысăкрах. 1941 çулти январĕн 1-мĕш тĕлне чĕртаварсемпе материалсен нормативран иртсе каякан запасĕсем пĕр промышленноçлă наркоматсем тăрăх кăна 1.490 пин тенкĕлĕх пулнă. Наркомпищепром предприятийĕсем тăрăх вĕсем 460 пин тенкĕлĕх ытла пулнă.

Шупашкар хулинчи Промкомбинатăн директорĕ Делицын юлташ финанс ĕçĕнчи йывăрлăхсем çинчен калать. Анчах çак комбинатра мĕн куратпăпа эпир? Комбинат хăйĕн оборот средствисене чĕртаварпа продукцин ытлашши запасĕсем çинче тытса тăрать. 1940 çул валли Промкомбината таварлă-материаллă хаклăхсен нормативне 425 пин тенкĕлĕх çирĕплетсе панă, анчах та 1940 çулти январĕн 1-мĕш тĕлне унăн çав хаклăхсем 588 пин тенкĕлĕх пулнă, апрелĕн 1-мĕш тĕлне—614 пин тенкĕлĕх, июлĕн 1-мĕш тĕлне—883 пин тенкĕлĕх, 1941 çулти январĕн 1-мĕш тĕлне—828 пин тенкĕлĕх, 1941 çулти февралĕн 1-мĕш тĕлне—932 пин тенкĕлĕх. Паллах ĕнтĕ, оборот средствисене хуçалăхра çакăн пек вырнаçтарса тăма юрамасть. Чĕртаварпа материалсен запасĕсене, нормативран иртсе каякан çакăн пек пысăк запассене туса хурса, директор Делицын мĕн шухăшланăшши? Ăçта пулнă-ши хула Совечĕпе Наркомместпром? Комбинат вĕсемпе юнашарах вырнаçса тăрать вĕт.

Чĕртаварпа материалсен ытлашши запасĕсем средствăсене усăсăр выртаççĕ, финанс ĕçĕнче йывăрлăхсем кăларса тăратаççĕ, предприятисен ĕçĕнчи йĕркеллĕ ритма пăсаççĕ.

Чĕртаварăн тата таварлă-материаллă хаклăхсен нормативран иртсе каякан запасĕсене туса хурас практикăна татăклăнах пĕтерес пулать. Наркоматсем руководительсем предприятисенчи чĕртаварпа материалсен запасĕсене хăйсем валли çирĕплетнĕ нормативсемпе йăлтах килĕштерсе тума, оборот средствисемпе тĕрĕс усă курнине тăтăшах контроллесе тăрас ĕçе йĕркелесе яма тивĕçлĕ.

УПРАВЛЕНИ ĔÇĔНЧИ РАСХОДСЕМ

1941 çулта управлени органĕсене тытса тăрас ĕçре 19.628,5 пин тенкĕ, урăхла каласан, иртнĕ çултинчен 2.174,9 пин тенкĕ сахалрах расход тума палăртнă. Пĕтĕм бюджет сумминче çак расходсем 12 процент кăна йышăнса тăраççĕ.

1940 çулта Совнарком государство аппаратне пĕчĕклетес тата çав аппаратри расходсене чакарас тĕлĕшпе чылай ĕçсем туса ирттерчĕ, çакна пула 790 пин тенкĕ перекетлесе хăварнă. Çапла пулсан та, çак ыйту паянхи куна пысăк вырăн йышăнса тăрать-ха.

Эсир пĕлетĕр, ССР Союзĕн государство бюджетĕнче управлени аппаратне малалла пĕчĕклетнипе 2 миллиард тенкĕ илме палăртса хунă. Паллах ĕнтĕ, çак средствăсен пĕр паллă пайне пиллĕр республикăри управлени аппаратне пĕчĕклетнипе илмелле. Пирĕн кăткăс структурăллă управлениллĕ, ыгналашши штатсемлĕ учрежденисем, организацисем тата предприятисем халĕ те сахал мар-ха.

Акă Главнефтесбыт контори. Унта, чăнах та ĕнтĕ, штат пысăк мар—пурĕ 21 çын. Анчах та унта начальниксем 12 çын, виçĕ пайĕнчен пĕр пайĕ кăна оперативлă работниксем. 1940 çулта Çĕрпӳри примус горелкисем тăвакан заводра 27 рабочи пуçне административлă персонална обслуживающи персонал 21 çын пулнă.

Çакăн пек фактсене нумай илсе кăтартма пулĕччĕ.

Хăшпĕр организацисен руководителĕсем хăйсен

Чăваш АССР 1-мĕш созыври Верховный Совечĕн V Сессийĕ

Ф. Т. СЕМЕНОВ ЮЛТАШ ДОКЛАЧĔН ЮЛАШКИ

Шупашкар райсовет исполкомĕн сутĕç пайĕ шкулсем валли уйăрнă укçаран 10 пин тенке яхăн илсе законсăр усă курнă, исполком хăй вара управлени аппаратне тытса тăма сметăпа пăхнинчен ирттерсе 32 пин тенкĕ расходланă.

Ача амăшĕпе ачасен сывлăхне сыхлакан Институтра 1940 çулта 60 пин тенкĕ ытла укçана хуçасăрла расходласа пĕтернĕ.

Финанспа бюджет дисциплинине пăснисем республикăри ытти хăшпĕр наркоматсемпе районсенче те пур. Финанс дисциплинине кирек те мĕнле пăснине татăклăнах пĕтерес пулать. Государство средствисемпе усă курас ĕçе финоргăнсен лайăхрах тĕрĕслесе пымалла.

Предприяти, учреждени ĕçĕнче тĕрĕс йĕркеленĕ учет пысăк вырăн йышăнса тăрать.

Маленков юлташ ВКП(б) XVIII конференцинче тунă докладра: «Оборудованисене, пурлăха, материалсене тĕрĕс учета илмесĕр предприятие ертсе пыма çук», тесе каларĕ.

Тивĕçлĕ учет сукки ĕçре чăмантарать кăна мар, тата çаратакансем валли лайăх условисем туса парать.

Учета йĕркерен кăларса яни акă мĕн пате илсе пырать.

Автотранспорт управленинче материалсене, запаслă цайсене çаратса пĕтернĕ, кайран вара, автомашинăсемпе груз турттарнин хăйне ларакан хакне кĕртсе, вăл тăкаксене витсе хунă. Шупашкарти конторăра кăна 1940 çулта çавăн пек законсăр витсе хунă тăкаксем 147 пин тенкĕлĕх пулнă тата горючисене кирлинчен ирттерсе 30 тонна ытла çунтарса пĕтернĕ.

Аптекоуправлени Чăваш отделенинче 1940 çулта материалсене, таварсене, спецодеждăсене 20 пин тенкĕлĕх ытла çаратса пĕтернĕ, 10 пин тенкĕлĕх топливо ситменни палăрнă, çаксене вара пĕтĕмпех хуçалăхри ĕçсен результатне кĕртсе хунă.

Наркоматсен, учрежденисемпе предприятисен руководителĕсен учета йĕркелесе ярас тĕлĕшпе мерăсем йышăнас пулать тата ăна тĕрĕс туса пымалла тăвас пулать.

Наркомфинăн контроллĕ-ревизиллĕ ĕçĕ юлашки вăхăтра чылаях лайăхланчĕ. СССР Наркомфинĕн Контроллĕ-Ревизиллĕ Управленин Чăваш республикинчи старший контролер-ревизорĕн аппарачĕ 1940 çулта 1160 учрежденисемпе организацисенче, вăл шутра 6 наркоматра, 19 центральнăй учреждениисемпе хозоргăнсенче, ревизи туса ирттернĕ. 13 райгорбюджетсене, 392 ялсен бюджечĕсене ревизи туса ирттернĕ. 128 ревизи итогĕсене райсоветсен исполкомĕсен заседанийĕсенче тата 13 ревизи итогĕсене Совнарком заседанинче сӳтсе-явнă.

Контроллĕ-ревизиллĕ аппарат хуçалăх ĕçне йĕркелесе ярас çĕрте тата финанс дисциплинине çирĕплетессинче ведомствăри ревизорсен пысăк вырăн йышăнса тăмалла. Юлашки çулта хăшпĕр наркоматсенче çак ĕç кăштах лайăхланчĕ, çапах та, ведомствăллă контроль ĕçĕ халĕ те çителĕксĕр пулса пырать-ха. Наркомместпромра ревизор должноçне çулталăк ытла пушă тытса тăнă, наркомата пăхăнса тăракан учрежденисем контрольсăр ĕçлесе пыраççĕ.

Автотранспорт управленинче çав должноçа пачах пĕтерсе лартнă. Нумай наркоматсен руководителĕсем ревизи материалĕсем çине сӳрĕккĕн пăхаççĕ. Хăйсен учрежденийĕсен финанспа хуçалăх состоянине вĕренмеççĕ, вĕсенче йĕркелĕх тăвас тĕлĕшпе çителĕклĕ мерăсем йышăнмаççĕ.

Ведомствăллă контроль çине пирĕн тимлĕнрех çавăрăнса пăхмалла, управленин пур звенисенче те ревизи ĕçне тивĕçлĕ вырăна лартас тĕлĕшпе мерăсем йышăнмалла.

Депутат юлташсем! Чăваш АССР Республикин 1941 çулти бюджечĕ, эсир пăхса тухса çирĕплетме тăратнăскер, пирĕн республикăн халăх хуçалăхĕпе культурине малалла аталантарса пымалли программăна ăнăçлăн пурнăçа кĕртес ĕçре питех те пысăк вырăн йышăнса тăрать.

Вăл совет тата хуçалăх организацисене пурне те производствăллă программăна, ĕç тухăçлăхне ӳстермелли, продукцин хăйне ларакан хакне йӳнетмелли заданисене, накоплени тумалли, пирĕн материаллă тата финанс ресурсĕсене пĕтĕмпех мобилизацилемелли плана пĕтĕмĕшпех тултарассишĕн хĕрӳллĕн кĕрешсе пыма хушать.

1941 çулти бюджета пурнăçа кĕртсе пырса, ВКП(б) Пĕтĕм Союзри XVIII конференцийĕн решенийĕсемпе хĕçпăшаллăнпа Чăваш халăхĕ, Совет Союзĕн мĕнпур халăхĕсемпе пĕрле, çĕнĕ çитĕнӳсем тăвĕ тата хăй коммунистсен партийĕ тавра пĕтĕçсе тăнине, ĕçсăнисен çулпуçне тата тусне—аслă Сталина юратса, пĕтĕм чĕререн парăнса тăнине кăтартса парĕ. **(Алă çупаççĕ).**

Парторганизацисен отчетпа суйлав пухăвĕсенче

Докладчик чи кирлĕ ыйтусене манса хăварчĕ

Чăваш АССР Наркомюстри партбюро секретарĕ Семенов юлташ хăйĕн пĕр сехет хушши пынă докладĕнче, парторганизацин иртнĕ çулта пулса иртнĕ отчетпа суйлав пухăвĕ парса хăварнă сĕнӳсене аса илтерес, вĕсене пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе тунă ĕçсем çинчен каларĕ. Çитĕнӳсемпе çитменлĕхсем çинчен нумай чарăнса тăчĕ. Анчах наркоматри парторганизацине тӳрĕмех тивекен ыйту çинчен, аппарат ĕçне лайăхлатас тĕлĕшпе мĕнле ĕçлесе пыни çинчен сахал каларĕ. Çавăн пекех, вăл парторганизацин ĕç планĕ, ăна пурнăçа мĕнле кĕртсе пыни тата партбюро ВКП(б) членĕн кандидачĕсемпе мĕнле ĕçлесе пынине тĕплĕн кăтартса параймарĕ.

Наркоматсенчи парторганизацисен функцийĕсене тата вĕсен обязанноçĕсене ВКП(б) уставĕнче тĕплĕн кăтартса панă. Апла пулсан та, партбюро хăйĕн функцисене тĕрĕсех ăнланайман, вăл аппаратăн ĕçне лайăхлатса бюрократизмпа волокитăна пĕтерес тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлесе пынă. Тухса калакансем те çакна лайăх кăтартса пачĕç.

Партбюро отчечĕ тăрăх тухса калакансем наркоматпа Верховный суд аппарачĕсенче ĕçсыннисен жалобисене вăхăтра пăхса тухманни çинчен, хăшпĕр работниксем растратчиксен, социализмлă пурлăха çаратакансен тата ытти çавнашкал кирлевсĕр элементсен ĕçĕсене пăхса тухнă чухне йăнăшсем туни çинчен каласа пачĕç. Халăх судчĕсен отделĕнче тата адвокатурăра ĕçлекен коммунистсене критиклерĕç.

Никитин тата Миронов юлташсем адвокатура президиумĕн ĕçĕнче пысăк çитменлĕхсем пуррине палăртрĕç. Адвокат ĕçне йăла тĕлĕшĕнчен пăсăлса кайнă шанчăксăр çынсене илнĕ пулнă. Çавнашкал çынсем совет законне пăснă, çынсенчен законсăр укçа илнĕ (Карсаков), халăха юридически консультаци, совет граждăнĕсен правине çинчен ăнлантарса парас тĕлĕшпе сахал ĕçленĕ. Адвокатурăра ĕçлекенсенчен хăшпĕрисем дисциплинăна пăснă. Сăмахран, иртнĕ çулти ноябрь уйăхĕнчех Карсаков юлташ прогул тунă тесе сăмах тухнă. Çакна халĕ те тĕплĕн тĕрĕслемен.

Çавăн пекех, Верховный судри хăшпĕр работниксен ĕçĕнче пысăк çитменлĕхсем пулнă. Вĕсем тепĕр чухне ответлă ĕç çине çиелтен пăхнă. Хăйсен политикăллă пĕлĕвне, культурлăхне ӳстерес енĕпе сахал ĕçленĕ. Çавна пула ăнтăпитĕ ответлă документсене—суд определенийĕсене ăнланмалла мар çырнă, тепĕр чухне вăл документсем кулăшла пулса тухнă.

Партбюро çак çитменлĕхсене палăртса, вĕсене пĕтерес çĕрте наркомат руководителĕсене кирлĕ пек пулăшса пырайман, терĕç тухса калакансем.

Партбюро партиллĕ-массăллă ĕçе куллен туса пырас вырăнне, ăна юлашки вăхăтра начарлатнă. Коммунистсенчен хăшпĕрисем «ВКП(б) историйĕн кĕске курсне» вĕренме пăрахнă. Коммунист Миронов юлташ пухура çапла каласа пачĕ: «Эпĕ «ВКП(б) историйĕн кĕске курсне» çиччĕмĕш сыпăка çити вĕрентĕм, анчах тăвăттăмĕш сыпăкне сиктерсе хăвартăм. Мĕншĕн тесен, ăна вĕренме питĕ йывăр, пулăшу кирлĕ». Миронов юлташ калани тĕрĕс. «ВКП(б) историйĕн кĕске курсне» вĕренес сĕрте парторганизацин коммунистсене пулăшса пымалла пулнă. Çав вăхăтрах, Миронов юлташ пулăшу кĕтсе ним тумасăр ларни те тĕрĕс мар, хăй каланă тăрăх вăл çулталăк хушшинче те парткабинетра икĕ хут кăна пулнă.

— Партбюро стена хаçатне начар ертсе пычĕ, — тет Андрианов юлташ. Ку тĕрĕс. Семенов юлташ хăйĕн отчетĕнче стена хаçатне мĕнле ертсе пыни çинчен каламарĕ. Партбюро стена хаçачĕпе сахал интересленнĕ. Редколлеги отчетне итлемен, ку ыйтăва кун йĕркинчен икĕ хутчен кăларса пăрахнă. Çавăнпа та ĕнтĕ стена хаçатне çыракансем сахал, коммунистсемпе комсомолецсем те ку ĕçе сахал хутшăнаççĕ. Редколлеги членĕсенчен те стена хаçачĕн ĕçĕнчен пăрăнса тăнисем пулнă.

Работниксене ӳсме, вĕсен квалификацине ӳстерме пулăшас ыйтусем партбюро ĕçĕн кун йĕркинче сахал пулнă. Заочнăй йĕркепе вĕренсе пыракансене те пулăшса пыман.

ВКП(б) членĕн кандидатĕ Хримля юлташ кандидатсемпе сахал ĕçлени çинчен каласа пачĕ.

— Манăн хамăн та вĕренмелле, ачасене те вĕрентмелле, эпĕ ача амăшĕ—тет вăл. — Партбюро пирĕн çине сахал çăвăрăнса пăхать.

Юлашкинчен çакна каламалла: тухса калакан хăшпĕр юлташсем (Клавдеев, Перцев) хăйсен сăмахĕнче наркоматри парторганизацин функцийĕсене ăнланса илейменнине кăтартса пачĕç. Вĕсем наркомат руководителĕсен функцийĕсене кĕрекси ĕçсемпĕн парторганизацине критиклеме пăхрĕç. Сăмахран, вĕсен шухăшĕпе, партбюро районсенчи халăх судьисене тĕрĕс суйласа илменпĕн айăпла пулса тăрать. Аппаратри работниксем районсенче пулса, уйрăм судьясен çитменлĕхĕсене палăртнă хыççăн, вĕсем çинчен наркомат руководительне пĕлтермелле пулнă.

Отчетпа суйлав пухăвĕнче партбюро ĕçне тĕплĕн тишкерсе тухса чылай çитменлĕхсем палăртрĕç, вĕсене пĕтермелли майсене кăтартса пачĕç

М. МИТРОФАНОВ.

Çырса çитермен отчет

Карăклăри территориллĕ пуçламăш парторганизацин отчетпа суйлав пухăвĕнче организаци секретарĕ Муравьев юлташăн отчечĕ çапла пуçланчĕ: «Пирĕн парторганизацинче ВКП(б) членĕсем — 4, кандидатсем — 2. Иртнĕ суйлав хыççăн коммунистсен пухăвĕ 10 пулнă. ВКП(б) членĕн кандидачĕ Григорьев юлташ, «Броневик» колхоз председателĕ, вăрман хатĕрлес плана тултарман, парти членĕ Пугачев юлташ дисциплинăна пăсать».

Çакăнпа отчет пĕтрĕ. Муравьев юлташ аллинчи тетрадьне ик-виçĕ хутчен уçса пăхрĕ те, каçару ыйтса, йăвашăн: «эпĕ пĕтертĕм, манăн урăх çук, çырма ĕлкĕреймерĕм» терĕ. Отчет пурĕ те 10—15 минутăна яхăн çеç пычĕ. Отчетра колхозсене, ялсоветне, шкулсене парторганизаци мĕнле ертсе пыни, мĕнле пулăшни çинчен, коммунистсем мĕнле вĕренни çинчен пĕр сăмах та каламарĕ.

Коммунистсем çакăнпа килĕшме пултараймарĕç, Муравьев юлташа нумай ыйтусем пама пуçларĕç. Анчах вăл ыйтусем çине тивĕçлĕ ответ илеймерĕç.

— Коммунистсене партиллĕ порученисем панă-и?

— Панă та, анчах вĕсене пурнăçа мĕнле кĕртнине тĕрĕслемен.

— Парти историне вĕренме кружок туман. Анчах коммунистсем харпăрхăй тĕллĕн вĕренеççĕ-и?

— Пĕлместĕп, тĕрĕслемен.

— Единоличниксене колхоза кĕртес тĕлĕшпе мĕнле ĕçленĕ?

— Тăхтăр-ха, мĕçе единоличник пурха пирĕн? — тет Муравьев юлташ.

— Коммунистсем колхозсене мĕнле ертсе пыраççĕ?

— Калама пултараймастăп.

Çакнашкал ыйтусене коммунистсем нумай пачĕç. Ыйтусем панă вăхăт отчет тунă вăхăтран икĕ-виçĕ хут ытларах пулчĕ.

Парторганизаци пухăвĕ нимĕн хатĕрленмесĕр иртрĕ. Пухура дисциплина питĕ начар пулчĕ. Сергеев коммунист пуху пынă вăхăтра 16 хутчен тухса кĕчĕ.

Доклад тăрăх коммунистсем пурте тухса каларĕç, паха сĕнӳсем парса хăварчĕç.

М. ТИТОВ.

Канаш .(Хамăр корр.).

Иртнĕ суйлаври йăнăшсене тепĕр хут тумалла мар

Партин пуçламăш организацийĕсен ертсе пыракан органĕнсен отчетпа суйлав пухăвĕсене иртнĕ çулта Тăвай районĕнчи пуçламăш парторганизацисен секретарĕсен канашлăвĕ пулса иртрĕ.

Иртнĕ отчетпа суйлав пухăвĕсене ирттернĕ чухне районри чылай пуçламăш парторганизацисенче çитменлĕхсемпе йăнăшсем пулнă. Ун чухне Тĕмерти пуçламăш парторганизаци секретарĕн отчетне итленĕ хыççăн пренирекам та тухса каламан пулнă. Парторганизаци секретарьне суйлама кандидатура тăратасси çине те кунта çиелтен пăхнă. Пуçламăш парторганизаци секретарьне суйласан кăшт вăхăт иртсенех, ăна партиллĕ ĕçрен кăларма тивнĕ. Енших Нăрваширi, Тушкильри пуçламăш парторганизацисенче отчетпа суйлав пухăвĕсене васкаса, планпа пăхнинчен 4 кун малтан ирттернĕ.

Районри хăшпĕр пуçламăш парторганизацисенче парти хуçалăхĕ йĕркеллĕ мар. Уполнаркомзагри организацине Сĕнĕ Пуянкассинчи кандидатсен группи протоколсене парти райкомне вăхăтра тăратмаççĕ.

Канашлу çак çитменлĕхсене кăçалхи отчетпа суйлав пухăвĕсенче тума юрамаллине палăртса хăварчĕ.

М. РАЗНОМАЗОВ.

Тĕплĕн хатĕрленнипе кĕтсе илеççĕ

Сĕнтĕрвăрри районĕнче пуçламăш парторганизацисен ертсе пыракан органĕнсен отчетпа суйлав пухăвĕсем апрелĕн 11-мĕшĕнче пуçланчĕç. Отчетпа суйлав пухăвĕсене ирттерме хатĕрленнĕ май организацияллĕ ĕçсем чылай тунă. ВКП(б) райкомĕ пуçламăш парторганизаци секретарĕсен канашлуне ирттерсе унта отчетпа суйлавсене хатĕрлесси çинчен тĕплĕн сӳтсе-явнă. Çак ыйту тăрăх пуçламăш парторганизацисенче те пухусем туса ирттернĕ, отчетпа суйлав пухăвĕ ăста, хăçан пулассине палăртнă.

Мĕнпур пуçламăш парторганизацисен секретарĕсем отчетсене çырса хатĕрленĕ, нумайĕшĕ парти райкомне тăратнă.

Пуçламăш парторганизацисене пулăшма ВКП(б) райкомĕн членĕсене тата парти активне çирĕплетнĕ.

М. СИДОРОВ.

Европăри тата Африкăри вăрçă

(Вăрçă ĕçĕсен дневникĕ)

Балканри фронтра. Югославире, пысăк çапăçусем çурçĕр енче пулса иртнĕ. Югославин çурçĕр пайĕнче Германи войскисем Любляна тата Вараждин ятлă хуласене туртса илнĕ. Югослави командованийĕн сводкинче пĕлтернĕ тăрăх, нимĕçсем, Дарувар текен хула витĕр тухса, Сава юханшывĕ патне çитнĕ, вĕсем Югославире Греци хушшинчи чикĕ урлă каçнă. Греци командованийĕн сводкинче пĕлтернĕ тăрăх, Германин моторизованнăй войскисем Флорина — Вуофи районĕнче (Çурçĕр Греция) Греци войскисемпе тĕл пулнă. Офи (Гавас) агентстви Афины хулинчен пĕлтернĕ тăрăх, Грецин «Рупель» форчĕ противника çавăрăнса кĕрĕç тăрать, вăл Греци оборонин тĕп линийĕпе сыхăнса тăрать.

Германи бомбардировщикĕсем, тесе пĕлтерет Германири информаци бюровĕ, Саламисра (Саламин утравĕ, Афины хулинчен хĕвеланăç енче) рейдра тăракан суднăсем çине пырса тапăннă. Германи авиацийĕ, тесе паллă тунă Греци сводкинче, Пирай çине çĕнĕрен пырса тапăннă.

Çавăн пекех Мальта утравĕ çине те бомбăсем пăрахнă.

* * *

Англипе Германи фронтĕнче Германи авиацийĕн активлăхĕ палăрать. Германи бомбардировщикĕсен пысăк соединенийĕсем, тесе пĕлтернĕ Германи командованийĕн сводкинче, апрелĕн 12-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Кăнтăр тата Центральнăй Англири вăрçă тĕлĕшĕнчен палла вырăнта тăракан сооруженисем çине пырса тапăннă. Портлă тата промышленноçлă хуласем — Бристольпе Портсмут çине бомбăсем вăйлăн пăрахнă. Германин сывлăшпи вăйĕсем хăйсен операцийĕсене тинĕс çинче те туса пынă.

Çĕнĕрен илнĕ даннăйсем тăрăх, тесе пĕлтерет Рейтер агентстви, Англин сывлăшпи вăйĕсем апрелĕн 11-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Германин «Шарнгорст» тата «Гнейзенау» ятлă линкорĕсем çине икĕ хутчен бомбăсем пăрахнă, вăл линкорсем Брестра (Франция) пытанса тăнă пулнă, унта Германин тинĕсçăр бази пур. Пĕлтерӳре çапла каланă: линкорсем çине тапăннă чухне самолетсем бронебойнăй бомбăсемпе усă курнă. Германи линкорĕсене сиен тунă пулмалла, тесе каланă пĕлтерӳре. Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх çав кунах Англи авиацийĕ Франци утравсенчи укрепленисем çине пырса бомбăсем пăрахнă. Апрелĕн 12-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Англи авиацийĕ, тесе паллă тăвать Рейтер агентстви, Германи çине пырса тапăнман.

* * *

Сурçĕр Африкăра, Киренаикăра, Англи войскисем, Англин Сывлăхри Хĕвелтухăçĕнчи вăйĕсем коммюникинче каланă тăрăх, Тобрукран хĕвеланăç енче Германипе Итали çăсĕсемпе тĕл пулнă. Итали сводкинче каланă тăрăх, Германипе Итали войскисем Айн Эль Газаль тенкен пункта йышăннă. Германипе Италин пикировка тăвакан бомбардировщикĕсен соединенийĕсем, тесе паллă тунă Германи сводкинче, Тобрукри порт сооруженийĕсем çине çĕнĕрен пырса тапăннă.

Хĕвелтухăç Африкăра, Эритрейăра, Англи войскисем, Англи сводкинче каланă тăрăх, икĕ пысăк çул тăрăх кăнтăр еннелле куçса пыраççĕ.

Абиссинире Англи войскисем çĕршывăн кăнтăр пайне шалалла кĕрсе пыраççĕ. Англин Аддис-Абебăран малалла кайса пыракан колонни Италин каялла чакакан çăсĕсене хыçалтан хĕçтерсе пыраççĕ.

Апрелĕн 12-мĕш. (ТАСС).

Германи командованийĕ пĕлтерни

БЕРЛИН, апрелĕн 13-мĕш. (ТАСС). Германин хĕçпăшаллă вăйĕсен верховнăй командованийĕ çапла пĕлтерет: апрелĕн 13-мĕшĕнче ирхине Германи войскисем кăнтăр енчен Белград хулине пырса кĕнĕ. Загреб районĕнче Германи çарĕн çăсĕсем çав-çавах малалла каяççĕ. Карловац патĕнче вĕсем Итали войскисемпе пĕрлешнĕ. Германи çăсĕсем Кăнтăр Сербире малалла наступлени туса пыраççĕ.

Сурçĕр Африкăра Германипе Итали çăсĕсем Тобрука хупăрласа илнĕ тата Киренаикăн хĕвелтухăç чиккинче вырнаçса тăракан Бардия портне тытса илнĕ. Тобрук портĕнче Германин пикировка тăвакан бомбардировщикĕсем Англи крейсерне путарнă.

Венгрия Югославине хирĕç вăрçăпа тухнă

БУДАПЕШТ, апрелĕн 12-мĕш. (ТАСС). Венгри генеральнăй штабĕ паян пичетлесе кăларнă коммюникере çапла кăтартса панă: Венгри войскисем Югослави территорийĕ çине пырса кĕнĕ, Дарда местечкине, çавăн пекех тата Дунайпа Тисса юханшывĕсем хушшинче вырнаçса тăракан Сомборпа Суботица хулисене туртса илнĕ.

Югослави премьер-министрĕ радио тăрăх тухса калани

БЕЛГРАД, апрелĕн 12-мĕш. (ТАСС). Югославири Авала агентстви çапла пĕлтерет: премьер-министр Симович радио тăрăх сăмах тухса каланă. Германи наступленийĕнчи пирвайхи çитĕнӳсем, тенĕ Симович, Югославине хăратса пăрахаймĕç. Югослави войскисем, противникне малалла кайма çарса лартас тесе, кĕрешӳн тĕп линийĕсем çине пухăнаççĕ. Симович халăха хăюллă пулма, çĕршывра йĕркелĕх тытса тăма, суя хыпарсенчен сыхланма тата Белградри граждăнсем пекех паттăр пулма чĕннĕ.

Симович Югославине СССР Союзĕ хушшинчи туслăха паллă тунă.

Ливанри демонстраци çине пăшалсемпе пулеметсенчен пенĕ

СТАМБУЛ, апрелĕн 12-мĕш. (ТАСС). Бейрутри «Жур» ятлă хаçат çапла пĕлтерет: Бейрутра никам организацилемесĕрех демонстраци пуçланса кайнă. Демонстрацире пуринчен ытларах хĕрарăмсемпе ачасем пулнă. Демонстрантсем пĕр требованипе иртсе пынă — çăкăр ыйтнă. Демонстрантсене резина чухмарсемпе хăваласа салатма май килмен, çакăн хыççăн вара полици пăшалсемпе пулеметсенчен пеме пуçланă, демонстрацине салатса янă. Нумай çын вилнĕ тата аманнă.

КĔСКЕН

▲ Чилири тинĕс-çар çыннисем хушшинче çапла калаççĕ: Германи рейдерĕ, тен подводнăй лодка пулĕ, Чилин кăнтăрти çыранĕнчи пĕр пунктран пĕрмаях горючисем илсе каять.

▲ Шанхайра де Голль майлă тăракан Ожель ятлă çынна арестленĕ. Франци Шанхайри концессийĕн власĕсем çапла пĕлтернĕ: Шанхайра де Голль майлă тăракан çынсен хаçатне кăларма тата вĕсен радиопередачисене пама чарнă.

Де Голль майлă тăракансем радио тăрăх çапла пĕлтернĕ: эпир юнанисенчен хăрамастпăр, хамăрăн ĕçе малаллах туса пыратпăр, тенĕ.

Атăл çинче

Атăл шывĕ юлашки вăçĕ талăк хушшинче 32 сантиметр, пурĕ 74 сантиметр хутшăннă.

Енертен пуçласа шыв хăвăрт хăпарма тытăнчĕ, пĕр талăк хушшинче 13 сантиметр хăпарнă.

Шыв горизончĕ, кĕркунне тулса юлнипе пĕрле, 102 сантиметра çитнĕ.

Шкулсенчи каникулсем

СĔНТЕР. Апрелĕн 13-мĕшĕнче районри шкулсенче çурхуннехи каникулсем пуçланчĕç. Шкул ачисем каникула савăнăçлăн кĕтсе илчĕç.

Мăн Сĕнтĕрти вăтам шкулта каникул умĕнхи вечер пулса иртрĕ. Унта çуркуннехи каникула ирттересси çинчен сӳтсе-явнă. Калаçу хыççăн шкулти хор юрăсем юрласа пачĕ. Вĕренекенсем сăвăсем тухса каларĕç.

Вăтам шкулта вĕренекенсем каникул вăхăтĕнче пĕлӳ тĕрĕслевне хатĕрленме тытăнчĕç.

С. Н.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ПОСЕВЫ СЕЛЬХОЗКУЛЬТУР

в колхозах и у единоличников

(а в колхозах питомники и урожаи садов и ягодников) застрахованы по обязательному окладному страхованию от:

а) градобития, ливней, бурь и огня на корню;

б) вымочек, вымерзания, выпревания, заморозков и наводнения;

в) посевы махорки и хмеля, кроме указанных бедствий, от засухи.

При гибели или повреждении сельхозкультур от указанных стихийных бедствий, колхозы обязаны в пятидневный срок после выявления гибели непосредственно заявить районной страховой инспекции, а единоличники—через сельский совет.

При несвоевременной заявке о гибели или повреждении посевов, Госстрах имеет право отказать в выдаче страхового возмещения. За бланками заявлений о стихийных бедствиях сельхозкультур колхозы должны обращаться в Райстрахинспекции.

4—1 **Чувашгосстрах.**

Таджик искусствин Мускаври декади

„Шуриши Восэ“ операн тата „Лола“ спектаклĕн пысăк çитĕнĕвĕ

Спектальте И. В. СТАЛИН, В. М. МОЛОТОВ, А. И. МИКОЯН юлташсем пулнă

Апрелĕн 12-мĕшĕнче СССР Союзĕн Пысăк театрĕн филиалĕнче таджик искусствин декади уçăлнă. Çак куна Мускаври ĕçсыннисем питех те пысăк интереспе кĕтнĕ. Столипăри курса лармалли чи пысăк залсенчен пĕрне кĕрсе шăнăçайми таранах халăх пухăннă. Государствăн Таджикистанри операпа балет театрĕ «Шуриши Восэ» («Восэ восстанийĕ») операна кăтартнă. Çак операн музыкине Таджик ССР искусствăсен тава тивĕçлĕ деятелĕ С. А. Баласанян çырнă, либреттине — çамрăк поэт-орденоносецсем М. Турсун-Заде тата А. Дехоти çырнă.

Операн çамрăк коллективĕ кĕске срокрах паллă çитĕнӳсем тунă. Çакă вăл пуринчен малтан хора тивет, вăл массăллă сценăсене пурне те шанчăклăн ирттерет. Таджик ССР тава тивĕçлĕ артисчĕ Б. Тураев халăх геройĕн — хăюллă та паттăр Восэн чаплă образне кăтартса панă. Чи паллă рольсенче вылянă артистсем — Таджик ССР тава тивĕçлĕ артисчĕсем Т. Фазылова (Гулизор, Восэ хĕрĕ) тата А. Муллокандов (дехканин Назир) лайăх вылянă.

Курса ларакансем ташăсене питех те юратса пăхнă. Балет солисткисем Таджик ССР тава тивĕçлĕ артисткисем — А. Исхаковăпа А. Азимова тата балет солисчĕ Г. Валамат-Заде уйрăмах лайăх вылянă.

Асра юлакан операллă спектакль кăтартса панă коллектива — постановкăн пур участникĕсене те — курма пынă çынсем ăшă кăмăлпа саламланă.

(ТАСС).

* * *

Апрелĕн 13-мĕшĕнче СССР Пысăк театрĕн филиалĕнче таджик искусствин декадин 2-мĕш спектаклĕ пулса иртнĕ. Государствăн Таджикистанри операпа балет театрĕ çак кун «Лола» («Тюльпан») ятлă музыкăллă представлени кăтартса панă. Çак илемлĕ те хаваслă спектаклĕн çăлкуçĕ — халăхсен çуркуннехи уявĕ пулса тăрать, çав уява ака ĕçĕсене вĕçленĕ хыççăн, сăрт хĕррисенчи усланкăсенче тюльпансем чечеке ларсан Таджикистанра тахçантанпах иттереççĕ.

Çак спектакль москвичсене таджик сен музыкăпа ташă фольклорĕн питех те интереслă образецĕсемпе паллашма май панă. Халăх мелодийĕсем тĕрлĕрен ташăсемпе сыхăнса тăнă пирки, колхозри савăнăçлă уява кăтартса паракан çак музыкăллă представлени питех те ăнăçлăн иртнĕ.

«Лола» спектакльте И. В. Сталин, В. М. Молотов, А. И. Микоян юлташсем пулнă. (ТАСС).

СССР Наркомюстĕнче

СССР Наркомюстĕнче судсем хулиганла ĕçсене хирĕç кĕрешес тĕлĕшпе туса ирттернĕ ĕçсен итогĕсене тунă. Фактсем çакна кăтартса параççĕ: СССР Верховный Совечĕн Президиумĕ «Производствăри вак-тĕвек çаратусемшĕн тата хулиганла ĕçсем тунăшăн уголовнăй йĕркепе ответ тыттарасси çинчен» Указ кăларнăранпа иртнĕ çичĕ уйăх хушшинче хулиганла ĕçсемшĕн суд умĕнче ответ тытакан çынсен хисепĕ чылаях чакнă. Çакă вăл çавăн пек ĕçсене пăхса тухма ятарласах тунă суд участокĕсен хисепне чакарма май панă. 1940 çулти октябрь уйăхĕпе танлаштарса пăхсан, февраль уйăхĕнче Мускаври судсем хулиганла ĕçсем çинчен калакан ĕçсене икĕ хута яхăн сахалрах пăхса тухнă. Ленинградра, Молотов облаçĕнче тата çĕршыври ытти пысăк центрсемпе промышленноçлă районсенче те ĕçсем çакнашкалах.

Çапла пулсан та, юлашки вăхăтра хăшпĕр судсем хулигансем тĕлĕшпе тытса пыракан карательнăй политикăна вăйăрлатнă. Сăмахран, Горький хулинче Автозавод районĕнчи пĕрремĕш участокри халăх сучĕ пăхса тухнă 29 ĕçрен 19 ĕçне Уголовнăй Кодексăн çемçерех наказани паракан статьисем тăрăх хаклана. Пĕр темĕнле Синицын, хулиганла ĕçшĕн халичченех судпа айăпланнăскер, общежитире япаласене çĕмĕрсе пĕтернĕ, милиционера хирĕç тăнă. Закон хушнине пăхмасăрах Синицына çур çул хушши юсанмалла ĕçлеттермелле хăна тунă.

СССР Юстици Халăх Комиссариачĕ судсене хулигансем çине либерална пăхма юраманни çинчен кăтартса панă. Хулиганла ĕçсем тăвакансене хирĕç кĕрешесси — халĕ те çĕршыври суд органĕсен ĕçĕнчи тĕп задачăсенчен пĕри пулса тăрать. (ТАСС).